чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ШĂМАТ КУН
2014, ака /апрель/ 26

77-78 /26483-26484/ № №    Хакĕ ирĕклĕ    www.hypar.ru

*Пулăм*

# Уявăмăр чаплă пулин те...

***Ĕнер çанталăк ăмăр тăчĕ. Вăл шăпах пирĕн çирĕплĕхе, эпир чăвашлăха мĕнле парăннине тĕрĕслемелли кун пулчĕ тейĕттĕм. Тĕлĕнмелле те, Чăваш чĕлхи кунне халалласа Аслă вĕрентÿçĕн И.Я.Яковлевăн тĕп хулари палăкĕ умĕнчи митинга халăх кунашкал сахал пуçтарăннине халĕччен курманччĕ.***



Çулленхи митингран пĕрре те юлманран, ăна мĕнлерех шайра йĕркеленине эпĕ те сăнасах тăнă теме пултаратăп. Ас тăватăп: тĕрлĕ çул тĕрлĕ иртетчĕ вăл. Малтанхи тапхăрта, тăван чĕлхе ячĕпе тумалли ĕçсем ытларах чухне /хула шкулĕсенче чăваш чĕлхине хĕснĕ, тăван чĕлхене патшалăх чĕлхи туса хурас тенĕ вăхăтра тата ыт. те/, хĕрÿллĕччĕ.

Çивĕч ыйтусене пĕчĕккĕн татса пынă май е хамăр пĕр евĕрлĕ çак мероприятие хăнăхса пынăран та-ши – пит илĕртÿллех пулма пăрахрĕç аслă, ватă, пуян тăван чĕлхе ячĕпе иртекен митингсем. Темиçе çул ĕнтĕ унта çÿллĕ шайри пуçлăхсене курмастпăр, йыш та «шĕвелсе» пырать. Кăçалхи уявра, тĕпрен илсен, хулари 10-мĕш, 6-мĕш вăтам шкул ачисем, чунĕпе чăвашлăхшăн çунакан 40-50 çын пулчĕç.

Митинга ертсе пыракан Чăваш халăх артисчĕ Иван Иванов тата Леонид Антонов уява уçса ЧР культура министрне Вадим Ефимова сăмах пачĕç. Вадим Петрович чăваш чĕлхи ячĕпе çак кунсенче республикăра çеç мар, «ăçта чăваш чĕри тапать, чунĕ пурăнать – çавăнта пысăк, халăха пĕрлештерекен уявсем иртеççĕ» терĕ.

ЧР вĕренÿ министрĕн пĕрремĕш çумĕ Светлана Петрова Чăваш чĕлхи кунĕнче пĕлтĕртен кĕнĕ çĕнĕлĕх – Пĕтĕм чăваш диктанчĕ– пурнăçа кĕме пуçлани пирки каларĕ.

Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ Петр Ивантаев ЧНК хастарĕсем çак кунсенче пурнăçлакан ĕçсемпе паллаштарчĕ: Николай Угаслов президент ертсе пынипе сумлă ушкăн Иван Яковлевăн тăван ялĕнче – Тутарстанри Кăнна Кушкинче – пулнă, унтан Пушкăртстан тĕп хулине çул тытнă. Йăхташсем пурăнакан хутлăхсенче Улăпăмăр ячĕпе пысăк мероприятисем ирттереççĕ.

ЧР Профессионал писательсен союзĕн председателĕн çумĕн Геннадий Максимовăн сăмахĕсем уява хутшăннисене шухăша ячĕç пулĕ: çыравçăсем паян виçĕ союза пайланнă, пурне те тыткăнлама пултаракан хайлавсем сайра пулсан та, «эпир пулнă, пур, пулатпăр» терĕ. Ку енĕпе патшалăх та самай пулăшнине палăртрĕ. Сăмахран, ачасем валли çыракансене хавхалантарма грант йĕркеленĕ.

Тухса калаçакансем татах пулчĕç: И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ профессорĕ Геннадий Корнилов, Чăваш наци телерадиокомпанийĕн ертÿçи Александр Магарин, ыттисем.

Сăвă та вуларĕç, юрă та шăранчĕ. Тăван чĕлхене анлăрах янăрама сунни те пулчĕ, анчах чунра тунсăх хуçаланчĕ. Çитес çул та çаплах пуласран шикленчĕ-ши?

**Надежда СМИРНОВА.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ÿкерчĕкĕ

## Электрон çырăнтару çинчен – тĕплĕн



**«Хыпара» тата «Çамрăксен хаçатне» электрон майпа çырăнсан хут çине пичетленĕ хаçатсем вырăнне сирĕн патăра вĕсен электрон версийĕ пырса тăрĕ. Кĕскен – пичет кăларăмĕ тухнă кун хăвăрăн электрон почтăра кăларăмăн виртуаллă версине PDF форматра уçса вулаятăр. Сирĕн компьютерăн, ноутбукăн, нетбукăн, планшетăн е тата смартфонăн экранĕнче хут çинче пичетленнĕ хаçатах курăнĕ. Вăл текст тĕлĕшĕнчен те, калăплав енĕпе те почтальон валеçекеннинчен уйрăлса тăмасть.**

**«Хыпарпа» «Çамрăксен хаçатне» электрон майпа çырăнмашкăн хăвăршăн меллĕ меслете суйлăр:**

1. Пирĕн сайтра – hypar.ru – «çырăнтару» пайра заявка хăварма пултаратăр. Пирĕн ĕçченсем сирĕнпе çыхăнĕç. Укçа тÿлемелли счета факспа е электрон почтăпа ярса парĕç. Ăна кирек мĕнле банкра та тÿлеме пулать, квитанци копине редакцие 28-83-70 факспа е hypar@mail.ru электрон почтăпа ярса пама çеç ан манăр.

2. Редакцие килсе çырăнма май пур. Адресĕ: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пÿлĕм.

3. Хаçатăн электрон версине банк урлă çырăнса редакцие квитанци копине ярса пама пулать. Банк реквизичĕсем: АУ "Издательский дом "Хыпар" Мининформполитики Чувашии, р/с 40603810200000013969 в АКБ "Чувашкредитпромбанк" ОАО г. Чебоксары, БИК 049706725, к/с 30101810200000000725, ИНН 2130075064, КПП 213001001.

4. Яндекс-укçа /Яндекс-деньги/ тÿлев тытăмĕ урлă. Электрон енчĕк номерĕ: 410012154010810.

**Ан манăр: хаçатăн электрон версине сирĕн патăра ярса памашкăн хăвăрăн электрон почта адресне палăртăр!**

**Электрон çырăнтару мĕншĕн меллĕрех?**

◆**Укçăра перекетлетĕр.** Электрон çырăнтару хакĕ почта урлă илсе тăнинчен 8 хут йÿнĕрех. **«Хыпар» хаçата 2014 çулăн II çурринче** почтальонран илсе тăрас тесен 744 тенкĕ те 12 пус кăларса хума тивет. Электрон версине çур çуллăха çырăнма – 90 тенкĕ кăна. 654 тенкĕ перекетлесе эсир Чăваш радиовне итлеме приемник туянма пултаратăр. **«Çамрăксен хаçатне»** почта урлă илсе тăма 375 тенкĕ кирлĕ. Электрон версине эрне кунсерен çур çул вулама – 50 тенкĕ. Перекет – 325 тенкĕ! Ку укçапа кил хуçи – кĕпе, мăшăрĕ çÿç типĕтмелли фен туянма пултарать. Ачана парне тăвас тесен те нумай шухăшламалла мар – чаплă энциклопеди илеетĕр.

◆**Почтальона кĕтсе хăшкăлмăр.** Мĕн пытармалли: чылай тăрăхра хаçата е каçхине, е тепĕр кунхине çеç пырса параççĕ. Электрон верси вара хаçат тухнă кун ир-ирех сирĕн электрон почтăра пулĕ.

◆**Хаçата электрон майпа тĕнчен кирек хăш кĕтесĕнче те илсе тăма пулать.** Халĕ çĕнĕ номер аякри йăхташăмăрсем патне пĕр эрнерен кăна çитет. Электрон верси вара – çав кунах.

◆Эсир тинĕс хĕрринче хĕвелпе писĕхетĕр-и, командировкăна каятăр-и, çул çÿреве тухатăр-и?.. **Хаçатăн электрон версине кирек ăçта та вулама пулать.**

◆**Килĕшнĕ статьясене** хут çинчен вулас тесен ăна принтерпа хăвăра кирлĕ чухлĕ **пичетлеме пултаратăр.**

◆**Хаçат номерĕсем çухалмĕç** – хăвăра килĕшнĕ интервью-очерка темĕн чухлĕ вăхăт иртсен те электрон почтăна уçса тупса вулама меллĕ.

**Электрон çырăнтарăвăн çитменлĕхĕ пур-и?**

Вăл – пĕртен пĕрре: хаçат хутне чăштăртаттарма май çук.

**«Хыпарпа» «Çамрăксен хаçатне» электрон майпа çырăнас тетĕр-и? Эппин, виртуаллă тĕнчере сире хапăл туса кĕтетпĕр!**

**Раççей почтин мĕн пур уйрăмĕнче "Хыпара" 744 тенкĕ те 12 пуспа, "Хыпар-шăмат куна" 321 тенкĕ те 96 пуспа çырăнтараççĕ**

*Пĕтĕм чăваш диктанчĕ – 2014*

# Тăван халăхăн пурнăç йывăççи ешертĕр



***Чăваш чĕлхи кунĕнче çанталăк уяв майлă килсе тухмарĕ пулин те И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн чăваш филологи факультечĕ вырнаçнă корпусне пырса кĕрсенех диктант çырас кăмăллă йăхташăмăрсем хăйсене хăтлă туйрĕç.***

Кăнтăрла тĕлне кунти 201-мĕш аудиторири вырăнсене студентсемпе шкул ачисем /Канаш, Муркаш районĕсенчен килнĕ/, вĕрентекенсем йышăнма тытăнчĕç. Малти пĕр сĕтел хушшине вырнаçнă çулланнă арçын пуçне кĕнеке ăшне чикнĕ те тăрăшсах чăваш чĕлхин правилисене аса илет. Паллашрăмăр: Николай Евгеньев, Шупашкар районĕнчи Шăнкас ялĕнчен. Тивĕçлĕ канура пулин те ял хуçалăх производствинче тăрмашать – дояр. Тăван чĕлхепе диктант çырас акцие пĕлтĕр те хутшăннă иккен. Ун чухне япăххах паллă илни кăсал хăйне тепĕр хут тĕрĕслеме хĕтĕртнине пытармарĕ хастар чăваш. «Апашри халăх хорне юрлама çӳретĕп, культура çурчĕ валли тĕрлĕ стенд хатĕрлеме хутшăнатăп, тăван чĕлхене начар пĕлсен намăс пек туйăнать», – чунне уçать диктант умĕн ятарласа кĕнекесем туяннăскер.

Акă – палланă сăнсем. ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ĕçченĕ Валерий Петров пĕтĕм чăвашпа йĕркелесе ирттерекен мероприятие хутшăнса хамăрăн халăха хисепленине палăртасшăн. Унпа çумăн вырăн тупнă Галина Казакова, Çĕнĕ Шупашкарти Митта Ваçлейĕ ячĕллĕ 20-мĕш вăтам шкул вĕрентекенĕ, пĕлтĕр текста хăй тĕллĕн ларса çырнă та – ушкăнпа çак ĕçе пурнăçлама чылай кăсăклăраххине ăнланса кăçал аудиторие çитме май тупнă. 35 çул педагогикăра вăй хураканскер чăвашлăхшăн куллен çунать.

...Патшалăх тытăмĕнче ĕçлекен пысăк ушкăн пӳлĕме кĕчĕ. Республикăн вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕн çумне Светлана Петровăна пĕрлехи диктант мĕнпе илĕртнĕ-ши?

– Шкулта вĕреннĕ чухнех сочиненисем çырма юрататтăм, лайăх паллăсем илеттĕм. Кулленхи ĕçре чăвашла текстсемпе сайра-хутра кăна ĕçлеме тӳр килет, çапах пĕлӳ шайне чакарма юраманнине ăнланатăп. Ку – пĕрре, çапах та мана çыру акцине кăсăклансах хутшăнма текстпа паллашас килни хистерĕ. Марина Карягина – хăйне евĕр автор. Пирĕн нацишĕн тарăн шухăш палăртакан материал çырма пултарнă-и вăл? Мĕнле паллă илесси çинчен пуçа ватмастăп, çапах «иккех» пулмĕ тесе шанатăп, – терĕ Светлана Владимировна бланкра хушаматне палăртнă май. Диктант çырма килнисене пурне те Чăваш чĕлхи кунĕпе саламларĕ.

Чăваш Ен Патшалăх Канашĕн аппаратĕн ертӳçи Анатолий Ухтияров уява чун хавалĕпе килсе çитнĕ. Чăваш тĕнчине Илпек Микулайĕпе Валерий Яковлев пек маттурсене парнеленĕ хутлăхра – Шăмăршă районĕнче – çитĕннĕскер хăйне ытти регионсенчен республикăна килекен хăнасен умĕнче те яваплă туять: «Чĕмпĕр, Тутарстан тăрăхĕсенчи хăнасене çăкăр-тăварпа чикĕре кĕтсе илекенсем эпир, Шăмăршăсем. Апла тăк наци туйăмĕ пирĕнте хĕмленсе тăма тивĕç. Йăхташсемпе пĕрле алла калем тытса диктант çырни çак шухăша каланипе танах».

Паллах, тӳре-шара хутшăнни асăннă акци патшалăх ĕçĕ пулнине çирĕплетмест. Диктанта кашниех хăйĕн ирĕкĕпе çырчĕ. Апла пулин те унта чиновниксене те, мал утăмлă усламçăсене те ытларах курас килетчĕ. «Хăйсем паян çакăнта ларса историе лекейменшĕн /пĕтĕм халăхшăн пĕлтерĕшлĕ ĕç тăватпăр-çке!/ ӳкĕнĕç те-и тен? Пирĕн хавхаланăва ăмсанса килес çул айккинче юлмĕç тесе шанатпăр», – терĕ пĕтĕм чăваш диктантне çырас ĕçĕн йĕркелӳ комитечĕн пуçлăхĕ – Гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕн ертӳçи Юрий Исаев.

...Аудитори – лăк тулли. Текста итлемелли вăхăт çитрĕ – пӳлĕм варрине ăна хатĕрленĕ автор Марина Карягина тухрĕ. Чăваш патшалăх телерадиокомпанийĕн хастар ĕçченĕн сассине кашни чăваш паллать пулин те çак самантра пуçласа илтнĕн хăлхине чанк тăратрĕ. «Ху çĕклен те – халăхна çĕкле» ятлă диктантри кашни предложение ăша хывма тăрăшрĕ.

– Пысăк яваплăхпа пуçăнтăм çак ĕçе, – терĕ автор çыру ĕçĕ вĕçленнĕ хыççăн. – Ир тăрсан та, каç выртсан та пуçра шухăшсем тĕвĕленчĕç. Калас тенине кашнин чунне çитерес тени тĕпре пулчĕ. Чи пĕлтерĕшли – чĕререн тухнă сăмахăм тĕшĕллĕ пултăрччĕ. Çакăнта пухăннисем «пиллĕкшĕн», парнешĕн çунса килменех. Кусĕсенчен ăнлантăм çакна.

Çак кун Республика вĕренӳ институтĕнче те, педагогика колледжĕнче те, шкулсенче те диктант çырма хутшăнчĕç. Тĕплĕнрех – çитес номерсенчен пĕринче.

■ **Ирина ПУШКИНА.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

*Ас тăвăм*

# Ĕмĕр сипленми суран

***Ĕнер Шупашкарти «Сĕнтерӳ» Асăну паркĕнче Чернобыльти атом электорстанцийĕнче инкек пулнăранпа 28 çул çитнине асăнса хурлăхлă митинг иртрĕ.***

Унта Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова, ЧР Чрезвычайлă лару-тăру патшалăх комитечĕн председателĕ Вениамин Петров, Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн пуçлăхĕ Станислав Антонов, Чернобыльти синкере сирме пулăшакансем, хула çыннисем хутшăнчĕç. «Паян эпир Чернобыльти аварире вилнисене асăнма пухăнтăмăр. Çĕр пин çынна яхăн хăрушă çак авари сирме хутшăннă. Чăваш Енрен унта ятарлă специалистсем те, ахаль çынсем те тухса кайнă. Вĕсем паттăрлăх, хăюлăх, патриот, çынлăх туйăмĕ пысăк пулнине кăтартнă. Эпĕ те, кунта пухăннă кашни çын та – вĕсене чĕререн тав сăмахĕ калатпăр. Эсир паттăр пулнине, Тăван çĕр-шыва юратнине чĕнласах кăтартрăр, тивĕçĕре чыслăн пурнăçларăр. Чернобылецсене пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçу, вăрăм ĕмĕр сунатăп»,– терĕ Михаил Васильевич.

ЧР Патшалăх Канашĕн Социаллă политикăпа тата наци ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕн çумĕ Игорь Кушев та 1986 çулти инкеклĕ çав куна аса илчĕ: «Эпĕ ун чухне Хусан авиаци институтĕнче 4-мĕш курсра вĕренеттĕм. Тĕрĕссипе, эпир ун чухне мĕнле инкек пулнине ăнланман та. Çĕр-шыв пысăк, пулăшатпăр тесе шухăшланă».

«Шел те, эпир çулран çул сахалланса пыратпăр. Çав вăхăтрах пирĕн хушăра пурăнасчĕ-ха, малалла кĕрешесчĕ-ха текенсем те пур. Вăй-хăвата, хевтене нихăçан та ан çухатăр теес килет манăн вĕсене. Чăваш Республикинчен Чернобыльти инкекне сирме пулăшакансенчен çурри ытла пирĕнпе çук ĕнтĕ. Вĕсемшĕн хурланатпăр. Чĕррисен умĕнче вара пуçăма таятпăр, чĕререн тав сăмахĕ калатпăр»,– терĕ Чăваш Республикинчи «Чернобыль союзĕ» инвалидсен общество организацийĕн президентĕ Виктор Байдуков.

Митинга пухăннисем хăрушă инкекре вилнисене асăнса пĕр минут шăп тăчĕç, чернобылецсене тата ытти атом электростанцисенчи синкере сирме хутшăннисене асăнса лартнă палăк умне чĕрĕ чечексем хучĕç.

■ **Роза ВЛАСОВА**

*Парламент итлевĕ*

# Саккунпа килĕшӳллĕн

***Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин пуш уйăхĕн 12-мĕшĕнче РФ Патшалăх Думине федерацин «Раççей Федерацийĕн общество тĕрĕслевĕн тĕп никĕсĕсем çинчен» саккун проектне сĕннĕ. Вăл патшалăх влаç тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, муниципалитет организацийĕсен тата коммерциллĕ мар учреждениесен ĕçхĕлне йĕркелеме тата тĕрĕслесе тăма пулăшĕ. Саккун проекчĕпе килĕшӳллĕн тĕрĕслев шутне – мониторинг, общество тĕрĕслевĕпе экспертизи, халăх итлевĕ, тишкерӳпе пĕтĕмлетӳ кĕрессĕ.***

Асăннă саккун проектне халĕ халăхпа сӳтсе явассĕ. Ĕнер Правительство çуртĕнче «Чăваш Республикин общество тĕрĕслевĕн сферинчи хутшăнусене йĕркелекен саккунсене лайăхлатасси» темăпа парламент итлевĕ иртрĕ. Итлеве Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Патшалăх строительстви, вырăнти хăй тытăмлăх, Регламент тата депутат этики енĕпе ĕçлекен комитечĕ йĕркеленĕ. Комитет председателĕ Николай Малов ертсе пычĕ. Парламент итлевне Патшалăх Канашĕн депутачĕсем, республика правительствин членĕсем, ĕç тăвакан влаç органĕсенче тăрăшакансем, Этем, Ача тата Предпринимательсен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйсем, федераци влаçĕн территори органĕсен представителĕсем, судпа прокуратура, наказани тытăмĕнче ĕçлекенсем, ЧР Муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕн представителĕсем, массăллă информаци хатĕрĕсен журналисчĕсем, вĕрентекенсемпе вĕренекенсем, Общество палатин членĕсем, профсоюз комитечĕсен ертӳçисем, никама пăхăнман экспертсем тата ытти нумай общество организацисен членĕсем хутшăнчĕç.

Н.Малов малалла çĕнĕ саккун проекчĕн пĕлтерĕшĕпе тĕллевĕ çинче тĕплĕ чарăнса тăчĕ. Доклада сӳтсе явма «Чăвашрессовпроф» профсоюзĕн рескомĕн председателĕ А.Коршунов, Шупашкар хула пуçлăхĕ, ЧР Муниципалитетсен йĕркеленĕвĕсен канашĕн правленийĕн ертӳçи Л.Черкесов, ЧР Этем прависен уполномоченнăйĕ Ю.Кручинин, ЧР Патшалăх Канашĕн Эксперт канашĕн председателĕ В.Шуверов, «Раççей юрисчĕсен ассоциацийĕ» общество организацийĕн Чăваш регион аппарачĕн ертӳçи М.Кузьмин, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем О.Николаевпа Д.Евсеев, ЧР Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви çумĕнчи Общество палатин председателĕ И.Исаева, Чăваш Республикин Общество палатин председателĕ Л.Шимин тата ыттисем хутшăнчĕç.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

# Вĕсем чăвашсем çинчен ытларах пĕлесшĕн

***Чăваш Ене Китай Халăх Республикин Аньхой провинцийĕн делегацийĕ ĕçлĕ визитпа килнĕ. Кĕçнерни кун хăнасем республикăн информаци политикин министрĕпе Валентина Андреевăпа тĕл пулнă.***

Вĕсене саламланă май министр Чăваш Енпе Китая çыхăнтараканни нумайăшне палăртнă. Çав шутра – Тухăçăн тĕнчипе паллă тĕпчевçи тата çул çӳревçĕ Никита Бичурин. Чăваш тата китай чĕлхисенче пĕрешкел сăмах та чылай.

Делегаци Чăваш Енпе ĕçтешлĕх йĕркелес тĕллеве тĕпе хурса килнĕ. «Шупашкар, Чăваш Ен асамлă вырăнсен пулнине асăрхама ĕлкĕртĕмĕр. Республикăна çитнĕ чух хĕвел пăхатчĕ, кăштахран вара çил тухрĕ, юр çума пуçларĕ – тĕлĕнмелле! Пирĕн патра та халь çуркунне. Çанталăк сулхăн, анчах хамăра ăшшăн йышăннине туйрăмăр», – тенĕ провинцин культура департаменчĕн директорĕн çумĕ Дин Гуанцин.

Тĕл пулура икĕ республика телерадиокомпанийĕсен килĕштерсе ĕçлессине малалла тăсасси пирки калаçу пулнă. Енсем теле- тата радиопродукцие улăштарса илессине сӳтсе явнă. Аньхойра пурăнакансем чăвашсем çинчен ытларах пĕлесшĕн, тивĕçлĕ килĕшĕве алă пуснă май хатĕр проектсемпе программăсене пĕр-пĕрин чĕлхине куçарас енĕпе ĕçе пуçăнмалли çеç юлать.

■ **Д.ВОЛКОВ**

## Саламлатпăр

Чăваш Ен Пуçлăхĕн ака уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 53-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин ырлăхĕшĕн нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар хулинчи "ВНИИР-Прогресс" акционерсен уçă обществин Директорсен канашĕн председательне, тĕп конструкторне **Евгений Владимирович САГАРАДЗЕНЕ "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИ УМĔНЧИ ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇСЕМШĔН" орден медалĕпе** наградăланă;

ветеринари тытăмĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Чăваш Республикин "Сĕнтĕрвăрри районĕнчи чĕр чунсен чирĕсемпе кĕрешекен станци" бюджет учрежденийĕн пуçлăхне **Вера Леонтьевна УЛАНКОВĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ВЕТЕРИНАРИ ВРАЧĔ"** хисеплĕ ят,

ял хуçалăхĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Патăрьел районĕнчи "Исток" агрофирма" тулли мар яваплă обществăн тракторисчĕне **Анатолий Федорович ПАТШИНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ МЕХАНИЗАТОРĔ"** хисеплĕ ят,

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи "Нива" ял хуçалăх производство кооперативĕн дояркине **Елизавета Алексеевна ГОРШКОВĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ЯЛ ХУÇАЛĂХĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят,

культура, телерадиохыпарлав тытăмĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Чăваш Республикин "Чăваш наци телерадиокомпанийĕ" автономи учрежденийĕн радиохыпарлавăн продюсер центрĕн пуçлăхне **Олег Иванович ПРОКОПЬЕВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят,

физкультурăпа спорт тытăмĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Чăваш Республикин ачасене хушма пĕлӳ паракан "В.Н.Кочков ячĕллĕ Олимп резервĕн ачасемпе çамрăксен ятарлă 5-мĕш спорт шкулĕ" бюджет учрежденийĕн директорĕн çумне **Илья Владимирович ФОМИНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ФИЗКУЛЬТУРĂПА СПОРТĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят панă.

Форум

# «Тыл – Çĕнтерĕвĕн çурри. Ытларах та...»



*Шупашкарти «Салют» культура керменĕн фойинче вĕрсе каламалли инструментсен оркестрĕ патриот юррисене шăрантарать. «45-мĕш çулхи çуркунне» кĕвви янăрама пуçласан тыл ĕçченĕсен республикăри форумне килнĕ ветерансенчен чылайăшĕ чăтса тăраймасть: мăшăрăн-мăшăрăн вальс çаврăнма пуçлать.*

Теприсем Маяковский ячĕллĕ библиотека «Çĕнтерĕве пĕтĕм тĕнче туптанă – пирĕн çар та, тыл та» ятпа йĕркеленĕ кĕнеке куравĕпе паллашаççĕ, Чăваш наци музейĕ хамăр ентешсем – çар пуçĕсемпе полк ертÿçисем – çинчен хатĕрленĕ стенда кăсăкланса пăхаççĕ. Виççĕмĕшĕсем тахçанах тĕл пулман пĕлĕшĕсене курнă та иртнине аса илсе калаçаççĕ те калаçаççĕ. Палăртнă вăхăт çитсен тин васкамасăр залалла иртеççĕ.

Республика шайĕнче пĕрремĕш хут йĕркеленĕ çак форум тĕлне Чăваш Республикин хальхи историйĕн патшалăх архивĕ «Тыл – фронта» виртуаллă курав хатĕрленĕ. Ăна пăхнă май нумайăшĕн куçĕ шывланчĕ: вăрçă çулĕсенче тÿснĕ асаппа терт паянхи кун та манăçмаççĕ-çке. Хаяр çав çулсенче тыл фронта калама çук пысăк пулăшу кÿнĕ. Арçынсем – вăрçă хирĕнче, хĕрарăмсемпе ватăсем, ачасем колхоз-совхозра, завод-фабрикăра хăйсене шеллемесĕр ырми-канми ĕçленĕ. Çав вăхăтрах хĕрарăмсем салтаксем валли алсиш, нуски, свитер, калпак тавращĕ çыхнă, фуфайка, кĕпе-йĕм çĕленĕ, тăшманпа кĕрешекенскерсене посылкăсемпе савăнтарнă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçлансанах пирĕн республикăра çĕршывăн оборона фондне йĕркелес юхăм вăй илме тытăннă. Çынсем ку фонда укçатенкĕ хывнă, 1200 пин пăт тырă панă. Кĕçех колхозниксен хушшинче ырă тепĕр пуçару анлă сарăлнă: вĕсем хĕллехи вăхăтра килти хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх самăртнă, оборона фондне ăсатнă. 1941 çулхи чÿк уйăхĕнчен Чăваш Енре бронепуйăспа çар самолечĕсен строительстви валли укçа-тенкĕ пухма тытăннă. Республикăра пурăнакансем 1941-1945 çулсенче оборона фондне çар техники тумашкăн пĕтĕмпе 170 млн тенкĕ панă. Çынсем хăйсем выçăллă-тутăллă пурăннине пăхмасăр фронта пулăшнă, вăйне шеллемен, çĕнтерессе шаннă тата ашшĕсене, упăшкисене, пиччĕшĕ-шăллĕне, ывăлĕсене кĕтнĕ.

Шел, вăрçă ветеранĕсен тата тыл ĕçченĕсен шучĕ çулсерен чакать. Сыввисем те 80 çултан иртнĕ ĕнтĕ. Хальхи вăхăтра Чăваш Енре 25 пин тыл ĕçченĕ пурăнать. Вĕсенчен 700-шĕ республикăри форума килнĕ. Пухăннисене малтан Чăваш республикăри вăрçă, ĕç, Хĕç-пăшаллă вăйсен тата йĕрке хуралĕн органĕсен ветеранĕсен канашĕн председателĕ Анатолий Пукки саламларĕ, тыл ĕçченĕсемпе тĕл пулу тăтăшах йĕркелейменшĕн каçару ыйтрĕ. Шупашкар хула пуçлăхĕ, Шупашкар хула депутачĕсен Пухăвĕн председателĕ Леонид Черкесов ветерансем патне Чăваш Ен Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн саламне



илсе çитерчĕ, унăн ячĕпе пурне те чĕререн тав турĕ: аслă ăру çыннисем паянхи кун та общество ĕçне хутшăннăшăн, çамрăк ăрăва патриот воспитанийĕ пама пулăшнăшăн. Л.Черкесов Совет Союзĕн Маршалĕн Георгий Жуковăн сăмахĕсене те аса илчĕ: «Тыл – Çĕнтерĕвĕн çурри. Ытларах та...» Форума хутшăннисене çывхарса килекен Çĕнтерÿ кунĕпе çавăн пекех Шупашкар епархийĕн православи тĕн училищин ректорĕ Михаил Иванов протоиерей, ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин ветерансен ĕçĕсен тата халăха социаллă пулăшупа тивĕçтерекен уйрăмĕн пуçлăхĕ Елена Зайцева саламларĕç.

Тылра ырми-канми ĕçленисем те сцена çине тухса калаçрĕç. Акă Валентина Скотникова вăрçă çулĕсене кĕскен аса илчĕ. Чăваш Ене Ленинградран амăшĕпе куçса килнĕскер 1942 çулхи пуш уйăхĕнче Шупашкарти электроаппаратура заводне вырнаçнă. 17-ри пике ытти хĕр-упраçпа пĕрле кунне 12-шер сехет ĕçленĕ. Темле йывăр пулсан та пуçне усман. Валентина Александровна Çĕнтерÿ хыççăн та çав заводрах тăрăшнă, унта пĕтĕмпе 37 çул вăй хунă. Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ Геннадий Дмитриев Канаш районĕнчи Пайкилт ял тăрăхĕнчи Ветерансен канашĕн пуçламăш организацийĕ еплерех ĕçлени çинчен каласа кăтартрĕ. Унăн пуçарăвĕпе обелиска юсаса çĕнетнине пĕлтерчĕ. Ветерансене шкул ачисем – волонтерсем – пулăшнине палăртрĕ.

Форумра тыл ĕçченĕсене Пĕтĕм Раççейри тата республикăри Ветерансен канашĕн Хисеп паллисемпе, грамотисемпе чысларĕç. Мероприяти пысăк концертпа вĕçленчĕ.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

Реклама

Энергетика

# «Ăшшисĕр» – пĕр кун та

***КЭС-Холдинг вĕри шывпа тивĕçтерессине пĕр тапхăрлăха чармалли вăхăта чакармалли программăна ĕçе кĕртет. Кăçалах проекта Холдинг ĕçлекен зонăри 22 хула, çав шутра Çĕнĕ Шупашкар хутшăнать. Çакăн çинчен «ТГК-5» АУОн Мари Элти тата Чăваш Енри филиалĕн /«КЭС» АХО тытăмне кĕрет/ ертÿçисем çурт-йĕре хутса ăшăтмалли тапхăр вĕçленнине халалланă пресс-конференцире пĕлтерчĕç.***

### «ГВС 2.0» ...

...е «Вĕри шывпа çĕнĕ шайра тивĕçтересси» – çапла ят панă программа потребительсене вĕри шывпа тивĕçтерессин çĕнĕ пахалăхне тата шанчăклăхне çирĕплетĕ, ăна КЭС ăшă парса тăракан тата ăшă сечĕсене тытса тăракан 15 регионта пурнăça кĕртĕç. Филиал директорĕ Юрий Цешковский палăртнă тăрăх – асăннă хуласенче энергетиксем çывăх çулсенчех вĕри шыва пĕр кунлăха та чармĕç.

Кăçалхи çулла вара химиксен хулинче пурăнакансен крансенчи «ăшшисĕр» кăштах тÿсме тивет. Энергетиксем тăхтав тивĕçлĕ нормăсем ирĕк паракан 14 мар, 8 кун кăна тăсăлтăр тесе пĕтĕмпех тăвĕç. Çитес çулах вара ăшă шыва вуçех те чармĕç, çакă ăшăпа тивĕçтерекен инфратытăм диагностикипе юсавĕн çĕнĕ техникăпа йĕркелÿ меслечĕсемпе усă курнин кăтартăвĕ пулĕ. Йÿнĕ ĕç мар. Пĕтĕм магистрале чармасăр пăрăхсен уйрăм сыпăкĕсене тĕрĕслеме май паракан çĕнĕ опрессовка машини кăна 3,5 млн тенке ларнă, кирлĕ мĕн пур мероприяти валли вара вун-вун миллион уйăрĕç, ĕç темиçе çуллăх.

Мĕншĕн Çĕнĕ Шупашкар кăна? Проекта КЭС компанийĕсем ăшă энергийĕпе тата вĕри шывпа тивĕçтерессишĕн туллин яваплă хуласем кăна кĕреççĕ. Вĕри шыв пахалăхĕ вара генераци компанийĕнчен кăна килмест. Калăпăр, Шупашкарта, Йошкар-Олара – ăшăпа тивĕçтерекен икшер тытăм, çавăнпа та ТГК-5 ĕçтешĕсемшĕн явап тытаймĕ. Апла пулин те республикăн тĕп хулинче пурăнакансен пăшăрханмалла мар-тăр. Компани ертÿçисем шантарнă тăрăх – «ытти хулара та вĕри шыв парса тăрассин тăхтавне май пур таран чакарма тĕллев лартнă, Шупашкарта вăл кăçал 9-10 куна тăсăлĕ».

Филиалăн юсав компанийĕн графикне хуласен администрацийĕсемпе килĕштернĕ, инфратытăмăн ытти хуçин, управляющи компанисен те ăна шута илмелле, хăйсен профилактикăпа юсав ĕçĕсене 5-мĕш ТГКн техника службисемпе çураçтармалла.

### Пăтăрмахсăр хĕл

Çитес эрне пуçламăшĕнче Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта ăшă пама пăрахаççĕ. Филиалăн тĕп инженерĕ Александр Шудегов палăртнă тăрăх – çурт-йĕре хутса ăшăтмалли черетлĕ тапхăр «йĕркеллĕ те лăпкă иртрĕ – пăтăрмахсăр, аварисĕр ĕçлерĕмĕр, регионсенчи потребительсене ăшăпа электричество кал-кал тата çителĕклĕ парса тăнă, хамăрăн ресурса парса тăрас тĕлĕшпе нихăш потребителĕн те чăрмав пулман».

Ăшă сечĕсен, станцисен шанчăклă ĕçне оборудование, персонала вăхăтра тата тĕплĕ хатĕрлени тĕревленĕ. Паянах çитес хĕле хатĕрленеççĕ. 5 трубоагрегат, 3 хуран агрегачĕн юсавне вĕçленĕ ĕнтĕ. 2014 çулта ăшă электростанцийĕсен тĕп оборудованийĕн 23 единицине юсама планланă, çав шутра 12 хуран, 11 турбина.

Шупашкарти Николаев урамĕпе Октябрĕн 50 çулĕн урамне çитекен магистраль трубопроводне улăштарассин юлашки тапхăрне пурнăçламалли анлă ĕçсем пуçланаççĕ. Кивĕ 1 км ытла пăрăха улăштармалла. Хула çыннисемшĕн чăрмав сахалрах пултăр тесе ĕçсене темиçе тапхăра пайланă, çавна май автотранспорт куçăмĕ ĕçсене пурнăçланин вăхăтне кура уйрăм сыпăксенче кăна чарăнать. Çийĕнчен – çывăхри çуртсенче вĕри шыва чармасăр, ăна вăхăтлăх пăрăхпа парса тăраççĕ.

«Теплотрассăна хывнăранпа 20 çул ытла, – терĕ Чăваш магистраль ăшă сечĕсен техника директорĕ-тĕп инженерĕ Александр Невский, – трубопровод автоçул хĕррипе иртет, ăна тасатма хĕлле усă куракан тăварсем метала лексе япăх витĕм кÿреççĕ – пăрăхсем тул енчен вăйлах тутăхнă. Трубопровода улăштарни хула варринче пурăнакансене ăшă парса тăрассин шанчăклăхне тивĕçтерĕ». Юсав ĕçĕсене çурла уйăхĕн 30-мĕшĕччен пĕтĕмпех вĕçлесшĕн.

### Коммуналлă «хура шăтăк-и»?

Журналистсем потребительсен энергокомпани умĕнчи парăмĕсемпе те кăсăкланчĕç. Вĕсем, пытармаççĕ филиал ертÿçисем, юсав кампанине кăткăслатма пултараççĕ. Филиал директорĕн ăшă энергийĕ сутас енĕпе ĕçлекен çумĕ Светлана Жаркова пĕлтерчĕ: паянхи кун тĕлне ТГК-5 умĕнчи парăмсен пĕтĕмĕшле виçи 1,5 млрд патнех çитнĕ. Çак виçен тĕп пайĕ, 1,25 млрд тенкĕ, Чăваш Енри потребительсен тÿпи. Усă курнă ăшăпа вĕри шывшăн «Коммуналлă технологисем» ООО 620 млн тенке яхăн тÿлемен. Вун-вун миллион тенкĕлĕх парăмсем – Çĕнĕ Шупашкарти «Новэк» УК» ОООн /110 млн тенкĕ/, «Промтрактор» АУОн /56 млн тенке яхăн/...

«Коммуналлă технологисем» çулталăк пуçланнăранпа 5-мĕш ТГКна укçан тÿлеме вуçех те пăрахни пушшех пăшăрхантарать, çавна май парăма кăçал кăна икĕ хута яхăн пысăклатнă. «Пирĕн шухăшпа, – пăшăрханса каларĕ Светлана Александровна, – çак компани паян панкрутлăх умĕнхи ларутăрура. Хăйĕн обязательствисене ыттисен умĕнче те пурнăçлаймасть. Эпир пĕлнĕ тăрăх – ресурссемпе тивĕçтерекен ытти организацие те тÿлемест – газшăн, шывшăн, электроэнергишĕн».

Çав вăхăтрах КТ генеральнăй директорĕ çак кунсенче республикăри хаçатсенчен пĕрне интервью панăччĕ. Энергетиксен умĕнчи питĕ пысăк парăмсемшĕн кулянсах та каймасть пулас... Çавăнпах Ю.Цешковский унăн ĕçне сивлесе хакларĕ ĕнтĕ:

– Ун вырăнне эпир кулянатпăр, вĕсем тÿлеменнине кура пирĕн ума çурт-йĕре хутса ăшăтмалли черетлĕ тапхăра йĕркеллĕ хатĕрленес тĕлĕшпе хăрушлăх тухса тăрать-çке! Вăл кулянnă тăк «Коммуналлă технологисене» панкрутлăх умĕнхи ларутăрăва çитермен пулĕччĕ.

Вăйра тăракан саккунсене кирлĕ пек йĕркелесе çитерейменнине пула хăшĕсем темиçе уйăхлăх парăмсем пухса ресурссемпе тивĕçтерекен организацисен кивçенĕпе пурăнаççĕ – çапла пулса тухать вĕт. Çавăнпах 5-мĕш ТГКн Мари Элти тата Чăваш Енри филиалĕ КТ ертÿçисем халăхран энергоресурссемшĕн пухнă укçана куçарса паманни тĕлĕшпе саккуна пăсма пултарнине тĕрĕслемешкĕн право хуралĕн органĕсенчен пулăшу ыйтнине ăнланмалла. Укçа айккине каймасть-и текен иккĕленÿ пур-шим?

– Пĕтĕмпех питĕ ансат, – хуравларĕ Юрий Анатольевич, – эпир те, вĕсем те – патшалăх йĕркелесе пыракан организацисем, тарифсене тивĕçлĕ органсем çирĕплетеççĕ. Манăн Тариф службисем пирĕн продукци хăй хаклăхне ăçта та пулин мĕн те пулин хывма манать темешкĕн сăлтав çук. Эпир вăйра тăракан тарифсен картинче ĕçлеме пултаратпăр тăк, ман шухăшпа, КТ та пултармалла. Эпир вĕсенни пек дебитор парăмĕпех аталанатпăр – тĕслĕхрен, пуш уйăхĕнче 3-мĕш ТЭЦра çĕнĕ турбина хута ямалли 1,5 млрд тенкĕлĕх проекта вĕçлерĕмĕр, апла тăк вĕсем мĕншĕн хăйсен обязательствисене пурнăçлаймаççĕ? Çакна çеç каласшăнччĕ, малалла вара право хуралĕн органĕсем ĕç-пуça уçăмлатчăр.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

# ЫЙТУ — ХУРАВ

## Юратнă юмах — якутсен кĕнекинче

**Чăваш юмахне Раççей халăхĕсен юмахĕсен пуххине кĕртнине пĕлтĕм. Кĕнекене ăçта кăларнă? Ăна Чăваш Республикинче туянма пулать-и? Унта тата хăш халăх юмахĕсем кĕнĕ?**

**Е.АНИСИМОВА.**
Тăвай районĕ.




Саха Республикинчи /Якути/ С.А.Новгородов ячĕллĕ «Бичик» наци кĕнеке издательстви «Любимые сказки народов России» кĕнеке кăларнă. Юмахсен пуххине пирĕн çĕр-шывра пурăнакан тăхăр халăхăн сăмах вĕççĕн çӳрекен хайлавĕсен тĕслĕхĕсене кĕртнĕ.

Тĕрлĕ халăхăн юратнă юмахĕсен шутне чăваш халăхĕн «Лиса-плясунья» юмахĕ те лекнĕ. Чăваш кĕнеке издательстви ярса панă темиçе хайлавран шăпах çавна суйласа илнĕ. Кĕнекене пухса хатĕрлекенсене хушпу тăхăнса ташлакан тилĕ ытларах килĕшнĕ ахăртнех.

Раççей халăхĕсен юмахĕсем ырра, ĕçе юратма, тӳрĕ кăмăллă пулма вĕрентеççĕ. Якути издателĕсем кĕнеке халăхсен туслăхне, культура хутшăнăвĕсене çирĕплетме пулăшасса шанаççĕ.

Пушкăрт, удмурт, чăваш, эвенк, вырăс, дагестан, калмăк, тутар тата саха халăхĕсен юмахĕсене Е.Садовникова тата А.Сивцева художниксем илемлетнĕ. Кĕнеке питĕ хăйне евĕрлĕ. Эпир халĕччен курма хăнăхнă пек мар, тăваткал вăл, хуплашкка çинчи хăш-пĕр ӳкерчĕкĕн пайĕсене лакпа сăрланă. Илемлĕскер аслисене çеç мар, ачасене те питĕ килĕшнĕ.

Килти вулавăша «Любимые сказки народов России» кĕнекепе пуянлатас тĕллевлисене Чăваш кĕнеке издательствин лавккисенче кĕтеççĕ.

## Чăваш сăмсахĕ

**Иртыш шывĕн çыранĕнче Чăваш сăмсахĕ пур. Çак ят ăçтан пулнă? Ку тăрăхра чăвашсем пурăнман-и?**

**А.ФЕДОРОВ.**
Çĕрпӳ районĕ.

Чăваш сăмсахĕ – Тобольск хулинчен инçех мар Иртыш çыранĕ хĕрринчи Алфей тăвĕсен таврашĕнчи истори пĕлтерĕшлĕ вырăн. Кунта 1582 çулхи юпан 23-мĕшĕнче /чӳкĕн 4-мĕшĕ/ Ермак дружинипе Кучум ханăн çарĕсем çапăçăва кĕнĕ. Тюмень облаçĕнчи çут çанталăк палăкĕсен шутне, «Ермак йĕрĕпе» туризм проекчĕн тытăмне кĕрет.

1878-1879 çулсенче М.Знаменский художник тата тавра пĕлӳçĕ Чăваш сăмсахĕнче чавнă, тимĕр япаласемпе ухă йĕппин вĕçĕсене тупнă. Вĕсемпе остяксем усă курма пултарнă. Авалхи угорсен ялĕсен арканчăкĕсене М.Знаменский йăнăшпа Çĕпĕр тутарĕсен туса хунă. 1970 тата 1994 çулсенчи археологи экспедицийĕсем Чăваш сăмасахĕнче вăтам ĕмĕрсенче угор хулашĕсем пулнине çирĕплетнĕ. Анчах 1582 çул тĕлне вĕсенчен çынсем тухса кайса пĕтнĕ.

П.Словцев историк Çĕпĕр историйĕнче чăвашсем пулма пултарайманнине çирĕплетет, сăмсах ятне остяк чĕлхинчен куçарма сĕнет. «Под чуваши» каларăш остякла «çыран çывăхĕнчи ял» тенине пĕлтерет. М.Знаменский хăйĕн очеркĕсенче «под чуваш» ят «пăши хули» пек куçать тесе шухăшлать. Çакна вăл XIX ĕмĕр варринче кунта пăши майраки питĕ нумай выртнипе сăлтавлать.



Г.Миллер 1733-1743 çулсенче Аслă Çĕпĕр экспедицийĕ вăхăтĕнче пухнă документсем тата ытти çăл куç çинче никĕслесе хатĕрленĕ «Истории Сибири» ĕçĕнче Çĕпĕр çул çыравĕсенче чăваш топонимикине тата чăвашсен этносне асăннине асăрханă. Кучум çарĕнчи чăваш салтакĕсем Чăваш хулине хӳтĕленине тĕпе хурса çапла çырать: «Ку хулара, ахăртнех, хан Хусантан илсе килнĕ чăвашсем пурăннă».

В.Димитриев историк Ремезов çул çыравĕн материалĕсене тĕпе хурса сăмсах ятне чăваш салтакĕсем никĕсленĕ хулапа çыхăнтарать. Çĕпĕр çул çыравĕсене тĕпченĕ хыççăн В.Димитриев çапла пĕтĕмлетнĕ: Хусан ханĕ Сафа-Гирей 1520 çулсенче Çĕпĕр хулине янă чăваш салтакĕсен отрядне сăмсах çине вырнаçтарнă. Каярахпа çак вырăна «Чăваш» ят панă. Чăвашсем унта хула никĕсленĕ, икĕ енчен ур алтса çавăрнă, çӳллех мар валсемпе çирĕплетнĕ. Хулана чăваш салтакĕсемпе вырăс тупăçисем, каярахпа вĕсен ачисем сыхланă.

## Аваллăх тĕпчевçи

**Атăлçи археологи экспедицийĕн чăваш отрячĕ хăш тăрăхра шырав ĕçĕсем ирттернĕ? Миçемĕш çулсенче ĕçленĕ вăл?**

**А.АРХИПОВА.**
Куславкка районĕ.

Атăлçи археологи экспедицийĕн чăваш отрячĕ /ертӳçи В.Каховский/ 1962-1968 çулсенче Чăваш Республикинчи тата Тутарстанри Теччĕ районĕнчи авалхи тата вăтам ĕмĕрсенчи палăксене тĕпченĕ. Ĕçсене СССР Ăслăлăх академийĕн Археологи институчĕ 1958 çулта йĕркеленĕ Атăлçи археологи экспедицийĕн /ертӳçи А.Смирнов/ йышĕнче туса пынă. Ку экспедици 2004 çулччен тытăнса тăнă, унăн йышĕнче темиçе отряд пулнă. Археологи тĕпчевĕсене ытларах Вăтам тата Анат Атăлçи тăрăхĕсенче ирттернĕ.

Атăлçи археологи экспедицийĕн чăваш отрячĕ А.Смирнов тата В.Каховский ертсе пынипе 1962-1965 çулсенче /1962 çулта Г.Федоров-Давыдов хутшăннă/ Хулаш таврашĕнче нумай чавнă. 1966 çулта отряд Шупашкар районĕнче тата Мăн Çавал шывĕн бассейнĕнче тĕрлĕ тапхăрти палăксене тĕпченĕ. Разведка вăхăтĕнче Вăрнар районĕнче палăксен Çăкаллă Явăш комплексне тупнă. Шупашкар районĕнче Иккасси, Колешша, Самоккаси ялĕсен çывăхĕнче тĕрлĕ вăхăтри археологи палăкĕсене асăрханă, XVI-XVII ĕмĕрсенчи – тăхăр, Шупашкарта XVIII ĕмĕрти вун пĕр вил тăприне уçнă.

1966 çулта П.Трифонов ертсе пынă çум отряд Рыкша тата Кăкшăм шывĕсен таврашĕнчи территорие тĕпченĕ, бронза ĕмĕрĕнчи вун пĕр яла тупса палăртнă, çĕр айĕнчен чылай материал кăларнă. 1967-1968 çулсенче отряд Вăрнар районĕнчи Çăкаллă Явăш, Сăкăт ялĕсен таврашĕнче тĕпчевсем ирттернĕ. Унта А.Смирнов, Ю.Краснов, В.Ледяйкин, В.Злобина хутшăннă. 1968 çулта Шупашкарта шырав ĕçĕсем ирттернĕ.

Археологсем тупнă истори пĕлтерĕшлĕ япаласем Чăваш наци музейĕнче, ытти çĕрте упранаççĕ.

## Христос ăçта пурăннă?

**Иисус Христос ăçта çуралнă, пурăннă?**

**И.ИВАНОВ.**
Вăрнар районĕ.



Иисус Христос христианлăх тĕнне никĕслекен шутланать. Унăн çĕр çинчи пурнăçĕ пирки Евангели каласа кăтартать. Христос çурални çĕнĕ эра пуçланнине пĕлтерет. Иисус, тĕпрен илсен, Палестинăра, Çывăх Хĕвел тухăçĕнче, пурăннă.

Иисус вăхăтĕнче Палестина хальхи Израиль вырнаçнă территорие йышăннă. Хĕвел анăçĕнче – Вăта çĕр тинĕсĕ, кăнтăрта – Египет, хĕвел тухăçĕнче – Иордани, çурçĕрте – Ливан, çурçĕр-хĕвел тухăçĕнче – Сири чиккисем. Библире «Палестина» сăмах тĕл пулмасть, мĕншĕн тесен Вăта çĕр тинĕсĕпе Иордан шывĕ хушшинчи çĕре 135 çулта тин Рим императорĕн хушăвĕпе çапла ят панă. Палестина темиçе провинцирен тăнă. Иисус пурнăçĕ Галилея /Иордан шывĕнчен хĕвел анăçнерехри çĕр/ тата Иудея /Вилĕ тинĕсрен хĕвел анăçĕнче/ провинцийĕсемпе çыхăннă.

Иисус Христос Иудейре, Вифлеем хулинче Иосиф платникпе Мария çемйинче çут тĕнчене килнĕ. Вĕсем Галилейре Назарет ялĕнче пурăннă. Император хăйĕн çыннисен çыравне ирттересси çинчен пĕлтерсен /кашнин хăйĕн хулинче регистрациленмелле пулнă/ вĕсем Вифлееме çул тытнă. Чарăнса тăмалли картишĕнче вырăн çитменрен Мария çĕр хăвăлĕнче хӳтлĕх тупнă. Çавăнта вăл Иисуса çуратнă. Малтан ашшĕ-амăшĕ пепкене Египета илсе кайнă. Каярахпа Назарета таврăннă. Кунта Иисусăн ачалăхĕпе çамрăклăхĕ иртнĕ.

30 çул тултарсан ăна Иоанн тĕне кĕртнĕ. Йăла-йĕркене Ливанпа Сири чиккинчи Хермон тăвĕ патĕнчен пуçланса хальхи Израильпе Иордани хушшинче вырнаçнă Вилĕ тинĕсе юхса кĕрекен Иордан шывĕнче ирттернĕ.

Тĕне кĕнĕ хыççăн Иисус 40 кун та 40 çĕрлĕхе çеçен хире тухса кайнă. Кунта вăл пĕчченлĕхре кĕлĕсем вуласа, типĕ тытса хăйĕн пысăк тивĕçне – этемлĕхе çăлма – пурнăçлама хатĕрленнĕ. Таврăнсан Иисус вĕренекенсене /апостолсене/ пухнă, Галилея çĕрĕ тăрăх çӳресе вĕрентĕвне çынсем патне çитерме пуçланă, тĕлĕнтермĕшсем кăтартнă, вилмеллех чирлĕ çынсене сыватнă. Кашни Мăн куна Иерусалима таврăннă. Христосăн чапĕ ӳссех пынă, ăна ĕненекен йышланнă. Çакă Иудея пачăшкисен кăмăлне кайман.

Хăйне хăрушлăх сыхласа тăнине пĕлсех Христос юлашки хут Мăн кунра Иерусалима пынă. Римлянсем ăна ярса илсе хупса хунă. Суд ăна пăлхавçă тесе йышăннă. Рим прокураторĕ Понтий Пилат приговор кăларнă. Христоса хуларан инçех мар Голгофа сăртĕнче хĕрес çине пăталаса вĕлернĕ. Евангели каласа кăтартнă тăрăх – виçĕ кунтан Иисус чĕрĕлнĕ. Христос çуралнă, вĕрентнĕ, пурнăçран уйрăлнă вырăнсене Сăвапллă çĕр теççĕ.

## Тăмран — çурт, мечĕт

**Африкăри чухăнрах территорисенче çурт-йĕре мĕнрен тăваççĕ?**

**М.СОКОЛОВ.**
Шупашкар хули.



Африкăра анлă сарăлнă строительство материалĕ – тăм. Ботсванăра пурăнакансем çурчĕсене тăмпа сĕрнĕ туратсенчен тăваççĕ. Тул енчен вĕсене шалчасемпе тĕкĕлеççĕ. Пӳрт тăрри – конус евĕрлĕ. Улăмпа е курăкпа витеççĕ. Чӳрече касмаççĕ, çил-тăвăл вăхăтĕнче шала хăйăр кĕресрен сыхланса алăкне пĕчĕк тăваççĕ. Çурт стенисене шал енчен йĕпе тăма пӳрнесемпе шăйăрттарса эрешлеççĕ. Пĕр çемье çыннисем пӳрчĕсене юнашар лартма тăрăшаççĕ. Тавралла лутра хӳме тытса çаврăнаççĕ.

Малире те çакăн евĕрлĕ çуртсемех тăваççĕ. Стенасене сĕрме банкопа /тăм тата вĕтетнĕ улăм хутăшĕ/ усă кураççĕ. Догон йăхĕсен пӳрчĕсем те тăмранах, анчах пачах урăхла сăн-сăпатлă. Вĕсем тӳр кĕтеслĕх евĕрлĕ, тăррисем лаптак. Çурт тăрринче хуçалăхра кирлĕ тĕрлĕ япала упраççĕ. Тырă ампарĕсене тăм юпасем çине лартаççĕ. Çапла майпа нӳрĕк тата кăшлакан чĕр чунсем сиенлесрен хӳтĕленеççĕ.

Суданăн çурçĕр пайĕнче пурăнакансем тăпрапа, улăмпа тата тислĕкпе хутăштарнă тăмран кирпĕч – саман – çапаççĕ. Унран вĕсем пĕчĕк чӳречеллĕ çӳллĕ çуртсем тăваççĕ. Тăррисем лаптак, алăкĕсем йывăçран. Çурт стенисене символла сăнарсемпе илемлетеççĕ.

Африкăра тăмран çурт çеç тумаççĕ. Унпа мечĕт хăпартма та усă кураççĕ. Çавăн пеккисенчен пĕри Малири Дженне хулинче вырнаçнă. Ăна 1907 çулта вăхăт тата çил аркатнă авалхи çурт вырăнне туса лартнă. Мечĕте çулсерен юсаса çĕнетсе тăраççĕ. 1988 çулта ЮНЕСКО ăна пĕтĕм тĕнче еткерлĕхĕн пĕр пайĕ тесе йышăннă.

**Кăларăма Валентина БАГАДЕРОВА хатĕрленĕ.**



# КРИМ

верс сем шы ав приговорсе риминал

2004 çулхи кăрлачăн 17-мĕшĕнче тухма пуçланă

## Канашлу

# Çулсем миллионсене çăтаççĕ те çăтаççĕ

***ЧР Пуçлăхĕ çумĕнчи Право йĕркине тивĕçтерес енĕпе ĕçлекен координаци канашĕн кĕçнерни кун иртнĕ ларăвне республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев кун йĕркинче пăхман ыйтуран пуçларĕ. Сăмах каллех çул-йĕр юсама уйăрнă укçапа тирпейсĕр усă курни пирки пырать…***



Михаил Васильевич Канашра пурăнакансемпе тĕл пулнă май çынсем асăннă хулари çулсене, картишсене юсас, пăхса тăрас енĕпе ĕçлекен организаци тĕлĕшпе ÿпкелешсе калаçнине аса илтерчĕ. Çавна май ЧР Пуçлăхĕн Тĕрĕслев управленийĕ Канаш администрацийĕ «Стройсервис» ОООпа 2012-2013 çулсенче, кăçалхи пĕрремĕш кварталта автомобиль çулĕсене юсама тата пăхса тăма тунă муниципалитет контракчĕсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕсленĕ. «Интереслĕ» самантсене çиеле кăларнă. М.Игнатьев палăртнă тăрăх – «йĕркене пăснă». Хула администрацийĕ ĕçсен пахалăхĕ тĕлĕшпе асăрхаттарса 17 акт çырнă, анчах ÿпкев çырăвĕсем янисĕр пуçне урăх нимĕнле мера та йышăнман. ЧР Пуçлăхĕ право хуралĕн органĕсене çак тĕрĕслевĕн официаллă кăтартăвĕсене, лаборатори экспертизисен пĕтĕмлетĕвĕсене тĕпе хурса тĕпчев ирттерме, должноçри çынсене явап тыттарма сĕнчĕ.

– Çав фирмăпа тунă контрактсен пĕтĕмĕшле хакĕ 32 млн тенкĕрен те иртет, бюджет тухăçлăхĕ вара – 0,8% шайĕнче кăна. Çав вăхăтрах ытти хула округĕсенче ку кăтарту 10-15% çитет, – терĕ Михаил Васильевич. Тепĕр тесен çакă кĕтменлĕх мар-тăр – «мĕншĕн тесен «Стройсервис» /директорĕ – Виталий Жураев/ çĕнтернĕ çул-йĕр аукционĕсенче вăл хутшăнакан пĕртен пĕр тытăм пулнă». Ĕçсене пурнăçланин акчĕсенче хайхи ĕçсене те пайăррăн кăтартман-мĕн – «Йошкар-Олара та юсама пултарнă – укçа пур пĕр каятчĕ...» Ыйтăва пĕтĕмлетнĕ май М.Игнатьев юлашки вăхăтра çул-йĕр юсавĕпе строительствинче саккуна пăснин тĕслĕхĕ ытла та нумаййи çинчен каларĕ, эппин, тивĕçлĕ тытăмсемшĕн ку вăранма хистекен шăнкăрав вырăнĕнче пулмалла.

Кун йĕркинчи ыйтусенчен экстремизмпа, сепаратизмпа, ксенофобипе кĕрешес енĕпе влаçăн тĕрлĕ тытăмĕ граждан обществин институчĕсемпе тачă çыхăну тытса ĕçлессин теми тĕп вырăнта пулчĕ. Республика прокурорĕ Владимир Метелин палăртнă тăрăх – Чăваш Енре юлашки çулсенче экстремизм палăрăмĕн курăмлă тĕслĕхĕсем пулман. Правăна пăснине тĕпрен илсен Интернет сетĕнче регистрацилеççĕ. Çавна май усал пулăма пропагандăлакан сайтсене, Интернет-кăларăмсене, блогсене тупса палăртас енĕпе çине тăрса ĕçлени вырăнлă.

Çамрăксен общество пĕрлешĕвĕсенче экстремизмпа терроризм профилактикин пĕлтерĕшĕ пысăк. Калăпăр, «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн Çамрăк гвардийĕн» Чăваш Енри хастарĕсем Интернет сетĕнче экстремизмпа терроризм материалĕсене саракан 17 пин ытла сайта тăрă шыв çине кăларнă, вĕсен пысăк пайне хупнă та ĕнтĕ.

Шалти ĕçсен министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Олег Яковлев Чăваш Енри 8 ушкăна /30 çын патнелле/ куçран вĕçертменнине пĕлтерчĕ. УФСИНăн кунти колонийĕсенче терроризмшăн судпа айăпланнă çынсем пур. Тата – Çурçĕр Кавказран илсе килнисем. Вĕсемпе те тивĕçлĕ ĕç ирттереççĕ. Пĕтĕмĕшле илсен лару-тăру йĕркеллĕ, çапах О.Яковлев самантлăха та лăпланма юраманни пирки каларĕ – пакунлисем лăпланмаççĕ те пулас.

Канашлу çавăн пекех преступлени туса илнĕ тупăша легализацилессине, терроризм валли укçа уйăрассине хирĕç тăрас ĕçе те тишкерчĕ. Федерацин налук службин республикăри управленийĕн ертÿçин тивĕçĕсене пурнăçлакан Ольга Никина пĕлтернĕ тăрăх – пĕр кунлăх фирма паллиллĕ тытăмсем тĕлĕшпе налукçăсем тивĕçлĕ ведомствăсене кварталсерен информаци параççĕ, çакă шанчăксăрскерсем таварсемпе тивĕçтермелли, патшалăх-муниципалитет нушисем валли пулăшу ĕçĕсем пурнăçламалли тĕрлĕ конкурса хутшăнасран сыхланма кирлĕ. Ĕç-пуçа тĕпчени çакна кăтартать: «сулахай» тупăша легализацилесрен, терроризма укçапа тĕревлесрен сыхланмалли саккунсем пурнăçланаççĕ. Ĕç-пуçа сăнасах тăни куç кĕрет.

Ларура республика территорийĕ çийĕн иртекен вĕçевсен хăрушсăрлăхне тивĕçтермелли мерăсене те сÿтсе яврĕç. Калаçăва М.Игнатьев пĕтĕмлетрĕ: «Чăваш Енре тĕрлĕ наци, тĕн çынни пурăнать, геополитика анлăшĕнчи лару-тăру ансат мар, çавăнпа та пирĕн сыхлăха çухатма юрамасть. Иккĕленÿ çуратакан мĕн пур сигнал тĕлĕшпе çийĕнчех тивĕçлĕ утăмсем тумалла».

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

## Суд залĕнчен

# Штраф виçи – 23,5 млн тенкĕ

***Взяткăшăн республикăра çакăн пысăкăш штраф тÿлеттерме йышăнни халĕччен пулнăччĕ-ши? Кирек мĕнле пулсан та – çак йĕркесен авторĕ унашкаллине ас тумасть.***

Канаш районĕн сучĕ Чăваш патшалăх университечĕн Канашри филиалĕн экс-директорĕ тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçпе приговор палăртнă. Ăна Уголовлă кодексăн 290 статйипе /взятка илни, çав шутра пысăк виçепе – 4 тĕслĕх/ тата 285 статйин 1-мĕш пайĕпе /должноç полномочийĕсемпе киревсĕр тĕллевпе усă курни – 3 тĕслĕх/ айăпланă. Приговор – 23,5 млн тенкĕлĕх штраф. Унсăр пуçне экс-директора аслă тата вăтам ятарлă вĕренÿ заведенийĕсенче преподавательте ĕçлеме икĕ çуллăха чарнă.

Следстви комитечĕн Канашри пайĕ тата суд çирĕплетнĕ тăрăх – директор филиал студенткинчен 2007-2012 çулсенче ултă хут укçа илнĕ – пĕтĕмпе 59 пин тенкĕ. Лешĕ ытахальтен тÿлемен ĕнтĕ: экзамен ведомоçĕсене тата зачет кĕнекине суя кăтартусем кĕртнĕшĕн укçа панă – çÿремесĕрех занятисене çÿренĕ, тытмасăрах зачетсемпе экзаменсене тытнă имĕш. Унсăр пуçне 2012 çулта çак хĕр тата икĕ студентка филиал директорне 25 пин тенкĕ взятка, ĕçмеçиме /4 пин ытла тенкĕлĕх/ панă. Ку хутĕнче диплом умĕнхи практика отчетне хатĕрленĕшĕн тÿленĕ. Чăннипе вара хĕрсем практикăра пулман, тивĕçлĕ зачетсене тытман.

Аппетит тени ÿссех пынă. 2012 çулхи юпа уйăхĕнче тата 2013 çулхи кăрлачра филиал ертÿçи вĕренĕве вĕçлекен виçĕ ушкăн студенчĕсенчен взятка ыйтнă – 330 пин тенкĕ ытла. Укçа пашалăх экзаменне ăнăçлă тытмашкăн, диплом ĕçĕсене хÿтĕлеме кирлĕ пулнă. Укçа ыйтнине çавăн пекех патшалăхăн аттестаци комиссийĕн членĕсене «хавхалантармаллипе» те сăлтавланă. 69 студентăн саккунсăр çак ыйтăва тивĕçтерсе укçа пама тивнĕ. 19 çамрăк тÿлеме килĕшмен.

Ку çеç те мар. 2012 çулăн иккĕмĕш çурринче директор виçĕ студенткăна паха диплом ĕçĕсем хатĕрлесе пама, кайран вĕсене университетăн патшалăх аттестаци комиссийĕ умĕнче хÿтĕлеме пулăшмашкăн шантарнă. Паллах, тÿлевсĕр мар. Сăмахне тытнă теме те юрать, анчах... Хĕрсене вăл умĕнхи çулсенче урăх студентсем çырнă диплом ĕçĕсен копийĕсене кăна панă.

Приговор саккунлă вăя кĕмен-ха. СК управленийĕн пресс-служби вĕренÿ заведенийĕн филиалĕн ертÿçи пулнăскерĕн саккуна хирĕçле ĕç-хĕлне ЧР Шалти ĕçсен министерствин тивĕçлĕ подразделенийĕсемпе тачă çыхăну тытса ĕçленĕ май тăрă шыв çине кăларнине палăртать.

■ **Н.ДМИТРИЕВ**

● ➡ *6, 11, 12 стр.*

КРИМ

## Ҫын тата саккун

# Ирĕке – амнистипе

***2013 ҫулхи раштавăн 18-мĕшĕнче РФ Патшалăх Думи Раҫҫей Конституцине йышăннăранпа 20 ҫул ҫитнĕ ятпа амнисти ирттересси ҫинчен пĕлтернĕ. Унпа усă курмашкăн ултă уйăх уйăрнă.***

Дума йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн амнисти 5 ҫул таран вăхăта ирĕклĕхсĕр хăварнă, маларах юсанмалли учрежденисенче пулман ҫынсене, ҫав шутра ҫул ҫитмен ачаллă хĕрарăмсене, ача ҫуратма хатĕрленекен хĕрарăмсене, 55 ҫултан аслăрах хĕрарăмсене пырса тивет.

Амнисти ҫинчен калакан йышăнăва тивĕҫлĕ документсене тĕпе хурса юсанмалли учреждени пуҫлăхĕн прокурор ҫирĕплетнĕ йышăнăвĕпе пурнăҫлаççĕ.

ЧР юсанмалли учреждениесенче саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан Шупакашкар прокуратурине Раҫҫей ФСИНĕн республикăри управленийĕн 8-мĕш колони-поселенийĕнчен йывăрлăхĕпе вăтам шутланакан преступлени тунă висĕ хĕрарăм тĕлĕшпе амнистипе усă курас пирки документсем килнĕ. Сăлтавĕ – иккĕшĕн ҫул ҫитмен ачасем пурри, тепри 56 ҫул тултарни. Прокурор колони пуҫлăхĕн йышăнăвĕсене ҫирĕплетнĕ хыççăн виççĕшне те ирĕке кăларнă.



Палăртни вырăнлă: асăннă амнистипе Чăваш Енри юсанмалли учреждениесенчен паянхи кун тĕлне тăваттăн ирĕке тухнă.

■ **Д.АЛЕКСЕЕВ,**
**ЧР ятарлă прокурорĕн пулăшуҫи**

## Взятка

# Укҫа ҫумне – 12 кĕленче эрех

***Следстви комитечĕн республикăри управленийĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕҫсене тĕпчекен пайĕ Федерацин пушар хурал службин Чăваш Енри «Сăнав пушар лабораторийĕ» судпа экспертиза учрежденийĕ» патшалăх учрежденийĕн экс-пуҫлăхĕ тĕлĕшпе харăсах тăватă уголовлă ĕҫ пуҫарнă. Ăна Уголовлă кодексăн 285 статйин 1-мĕш тата 290 статйин 5-мĕш пайĕсемпе айăплаççĕ.***

Пуҫлăх пулнăскере должноҫ полномочийĕсемпе киревсĕр тĕллевпе усă курнă тата взятка илнĕ, ҫав шутра ирĕксĕрлесе тата пысăк виҫепе, тесе шанмаççĕ. Следстви версийĕпе килĕшÿллĕн 2012-2014 ҫулсенче вăл килĕшÿ тумасăрах тата тÿлевсĕрех хăй ертсе пыракан учреждени вăйĕпе вырăнти икĕ фирмăна пушар хăрушсăрлăхĕ енĕпе пулăшу ĕҫсем кÿнĕ. Объектсене вут-ҫулăмран хÿтĕлес енĕпе пурнăҫланă ĕҫ пахалăхне тĕрĕслени, вĕсем пушар хăрушсăрлăхĕн требованийĕсене тивĕҫтерни ҫинчен калакан актсене хăех панă.

2012-2013 ҫулсенче хайхи пулăшу ĕҫĕсене тăсса ярассипе «юнаса» ҫав коммерци организацийĕсен ертÿҫисенчен 84 пин тенкĕ взятка илнĕ. Тата – 12 кĕленче шурă эрех. 2011 ҫулхи нарăсран тытăнса кăҫалхи нарăсчен общество организацийĕн регионти уйрăмĕн представителĕнчен те взятка илнĕ – 154 пин тенкĕ. Ҫак укҫана та ҫулăмран хÿтĕленмелли ĕҫсене чăннипе пурнăҫламасăрах тивĕҫлĕ пĕтĕмлетÿ панăшăн тÿленĕ.

Ҫийĕнчен висĕм ҫул тата пĕлтĕр ҫулла пуҫлăх ĕҫ вăхăтĕнче хăйне пăхăнса тăракансене Шупашкар районĕнчи Кÿкеҫ поселокĕнче хăйĕн коттеджĕнче строительствăпа отделка енĕпе ĕҫлеттернĕ. Ку, паллах, вĕсен служба тивĕҫĕсен шутне кĕмест, анчах ертÿҫĕ «питĕ ыйтсан» епле хирĕҫлĕн?



Преступленисене Следстви комитечĕн следователĕсем ЧР Шалти ĕҫсен министерствин районсен хушшинчи экономика хăрушсăрлăхĕн тата коррупципе кĕрешес енĕпе ĕҫлекен пайĕпе пĕрле тăрă шыв ҫине кăларнă.

■ **К.ЯКОВЛЕВ**

# Общество енчен – тимлĕ сăнав

***Чăваш Енре Обществăн сăнав комиссийĕ ĕҫлет. Раҫҫей Общество палатинчен пĕлтернĕ тăрăх – ăна федерацин ирĕксĕрлесе юсанмалли вырăнсенче ҫынсен прависене тивĕҫтерессине общество енчен тĕрĕслесе тăрасси ҫинчен калакан саккунĕпе килĕшÿллĕн йĕркеленĕ май комисси тивĕҫлĕ йышпа ĕҫлет.***

Республикăри ОСК йышне РФ Общество палатин канашĕн йышăнăвĕпе ҫирĕплетнĕ. Унта – тĕрлĕ тытăмпа организацин вунă представителĕ: А.Айвенов, П.Айвенов, Е.Бондарев, И.Булыгина, М.Кириллов, Н.Косыев, Г.Матвеев, А.Матис, Л.Черепанова, И.Шпак.

Комиссин тĕп тĕллевĕсен шутĕнче – йĕплĕ карталлă учреждениесенче ҫынсен прависене тивĕҫтернине тĕрĕслесе тăрасси, тĕрĕслев кăтартăвĕсем тăрăх сĕнÿсем хатĕрлесси, общество пĕрлешÿвĕсем, юсанмалли учреждениесен администрацийĕсем, влаҫ тытăмĕсем ҫынсен саккунлă прависемпе ирĕксĕре тивĕҫтерес енĕпе ҫыхăнса ĕҫлессине ҫирĕплетесси.

ЧР Общество сăнав комиссийĕ ҫак адреспа вырнаҫнă: Шупашкар хули, Ленин лапамĕ, 2 ҫурт, 118 пÿлĕм.

■ **К.АНТИПОВ**

## Следстви

# "Хÿтĕленсе... вĕлертĕм"

***Арҫын хăй ҫын пурнăҫне татнине хÿтĕленнипе тÿрре кăларма тăнă. Анчах Следстви комитечĕн Ҫĕмĕрлери пайĕ преступлени ÿкерчĕкне уҫăмлатнă, хÿтĕленÿ версийĕ суя пулнине ҫирĕплетнĕ. Ҫавна май тискерлĕх пушсех ҫÿҫентерет.***

Ку тĕслĕх пирки иртнĕ номерсенчен пĕринче эпир кĕскен ҫырнăччĕ. Халь ĕҫ-пуҫăн «интереслĕ» саманчĕсем уҫăмланчĕҫ те – тепĕр хут таврăнни те ытлашши мар. Аса илтерер: преступлени иртнĕ ҫулхи раштав варринче ҫĕрле пулнă. 34 ҫулти арҫын Улатăр районĕнчи Ахматово ялĕнче хăйĕн килĕнче пĕлĕшĕпе эрех ĕҫнĕ. Сăмах ҫине сăмах – хирĕҫсе кайнă. Кил хуҫи 33-ри юлташне ҫĕҫĕпе мăйĕнчен икĕ хут чикнĕ. Ыйхă артерине сиенленĕ те – юн нумай ҫухатнипе пула арҫын вилсе кайнă.

Тин хăраса ÿкнĕ пулас: мĕн туса хутăм? Следстви комитечĕн республикăри управленийĕн пресс-службин пĕлтернĕ тăрăх – преступник чееленнĕ, айăпа хăйĕн ҫинчен сирес тĕллевпе тÿрре тухма тăнă: пĕлĕшĕ хăй малтан ҫĕҫĕпе тапăннă-мĕн, ку вара хÿтĕленсе кăна ăна чиксе пăрахнă. Ҫак версие ҫирĕплетме вăл хăйĕн алли ҫинчи сурана кăтартнă – хайхи пĕлĕшĕ ҫĕҫĕпе амантнă-мĕн. Ҫийĕнчен вилнĕскерĕн аллинче ҫĕҫĕ пулни ҫинчен аса илтернĕ.

Следстви вара свидетельсен кăтартăвĕсене тĕпе хурса ҫак верси суя пулнине ĕнентерсе пама пултарнă. Сăмахран, инкек пулнă вырăна чи малтан килнĕ хĕрарăм каланă тăрăх – вилнĕ арҫын аллинче малтан ҫĕҫĕ пулман. Вăл мĕн пулса иртнине ăнланса илсен ҫак пÿртрен чупса тухнă, телефонпа полицие шăнкăравламашкăн килне васканă. Каялла шалти ĕҫсен органĕсен сотрудникĕсемпе пĕрле таврăннă. Ун чухне вара виле аллинче ҫĕҫĕ пулнă.

Унсăр пуҫне преступлени тунăскер хăй те кăтартусем панă чух арпашнă – пĕлĕшĕ ăна мĕнле ҫĕҫĕпе тапăнни пирки тĕплĕ каласа парайман. Суд экспертизисем пушшех иккĕленĕве сирнĕ, кил хуҫи хăнана вĕлернине ҫирĕплетнĕ, унăн алли ҫинчи суран вара ҫĕрлехи ĕҫ-пуҫпа пачах та ҫыхăнман.

Улатăр районĕн сучĕ арҫынна УК 105 статйин 1-мĕш пайĕпе айăпласа 11 ҫуллăха ирĕклĕхсĕр хăварма йышăннă, ҫак вăхăта вăл ҫирĕп режимлă колонире ирттерĕ.

Юнлă хирĕҫ тăру ҫак кунсенче те пулчĕ – Сĕнтĕрвăрри хулинче. Унта та ҫын пурнăҫĕ татăлнă.

Асли кĕҫĕннине ниçта та ĕҫлеменшĕн, ашшĕ-амăшĕн ĕнси ҫинче ларнăшăн ÿпкеленĕ те – 31 ҫулти ÿсĕр арҫын картишĕнче 57-ри ашшĕне тапăннă. Ăна кирпĕчпе пуҫĕнчен ҫапнă, карланкă тĕлĕнчен ҫĕҫĕпе темиҫе хутчен чикнĕ. Амăшĕпе пиччĕшĕ йывăр суранланнăскере пулăшнă вăхăтра преступник хăйĕн ҫине алă хума тăнă – хырăмне темиҫе хут чикнĕ.

Ашшĕ тепĕр кунне вилнĕ, унăн пурнăҫне татнă ывăлĕ вара больницăра – пурнăҫĕшĕн хăрушлăх ҫук.

■ **Николай ДМИТРИЕВ**

## Тĕрĕслев

# Шалу тÿлемен

***Шупашкарти Калинин районĕн прокуратури Е.Иванова ыйтнипе «Партнер» ОООра тĕрĕслев ирттерчĕ.***

Хĕрарăм ҫак фирма харпăрлăхĕнчи «Поколение» кафере администраторта ĕҫленĕ. График – виҫĕ талăк ĕҫлет те виҫĕ талăк канать. Анчах «Партнер» унпа ĕҫ хутшăнăвĕсене ҫирĕплетмен иккен, шалу та тÿлемен.

Ĕҫлев кодексĕпе килĕшÿллĕн ĕҫлекенпе ĕҫ паракан хушшинчи хутшăнусем ҫынна ĕҫе явăҫтарнă самантран пуҫланаççĕ, ҫакă ĕҫ килĕшĕвĕ ҫук тĕслĕхсене те пырса тивет. Ҫавна май прокуратура Е.Ивановăна хÿтĕлерĕ, унăн ĕҫ кĕнекине администратора тăрăшнине ҫырса хума, ăна шалу тÿлеме ыйтрĕ. Район сучĕ пирĕн ыйтăва туллин тивĕҫтерчĕ. Халĕ йышăну вăя кĕрессе кĕтмелли ҫеҫ юлать.

■ **Александр ТОЛСТОВ,**
**Шупашкарти Калинин районĕн прокурорĕ**

* * *

***Тăвай районĕн прокуратуришĕн те граждансен ĕҫлев прависене тивĕҫтересси тĕп вырăнта. Пĕлтĕр шалу шыраса илес тĕллевпе суда 78 ыйту тăратнă. Хальлĕхе Катяков фермер кăна 7 ĕҫчен уменчи 242 пин тенкĕлĕх парăма татман – ыйтăва куҫран вĕҫертместпĕр.***

Пĕлтĕр «Красная Чувашия» ЯХПК ĕҫченĕсенчен вăхăтра шалу тÿлеменни пирки темиҫе ҫăхав та пулнăччĕ. Тĕрĕслев 62 ҫынна 266 пин тенкĕ тÿлесе татманнине ҫирĕплетрĕ. Административлă ĕҫ пуҫартăмăр, предприяти ертÿҫине 5,5 пин тенкĕлĕх штрафланă. Парăма туллин татнă. Анчах раштаври тĕрĕслев каллех парăм капланнине тăрă шыв ҫине кăларчĕ – 408 пин тенкĕлĕх. Хуҫалăх ертÿҫине ҫакнашкаллишĕн маларах та явап тыттарнине кура адмĕҫ пуҫарнă хыççăн миравай судья В.Алексеева ҫулталăклăха дисквалификацилеме йышăнчĕ. Суд йышăнăвĕ вăя кĕнĕ ĕнтĕ.

■ **Оксана ЯСТРЕБОВА,**
**Тăвай районĕн прокурорĕ**

● ➡ 11, 12 стр.

ХЫПАР



*Вĕрентӳ*

# Техникум çĕнĕлĕх çулĕпе сулмаклăн утать

*Шупашкарти механика-технологи техникумĕ республикăри вăтам професси пĕлĕвĕн тытăмĕнче пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Унăн историйĕ пуян, аталану тапхăрĕсем курăмлă: 1942 çулта уçнă пир-авăр техникумĕнчен хальхи пурнăç, пасар экономикин ыйтăвĕсене тивĕçтерекен нумай профильлĕ вĕренӳ заведенине çити ӳснĕ. Унта автомобиль промышленноçĕ, машиностроени, пир-авăр отраслĕсем, пулăшу ĕçĕсен сфери валли специалистсем хатĕрлеççĕ. Техникум директорĕ – Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ Станислав Григорьев. Вĕрентӳ тытăмĕнче вăл çирĕм çиччĕмĕш çул, педагогикăра пысăк опыт пухнă. Чăваш патшалăх университечĕн дипломне илсен ăна Муркаш районĕнчи шкула янă. Ăсталăхĕ ӳссе пынă май яваплăрах ĕçсем шанса панă. Районта тĕп шкул директорĕ, производство вĕрентĕвĕн мастерĕ, вăтам шкул, çамрăк техниксен станцийĕн, лицей, Шупашкарти чăваш-туркка лицейĕн, Г.Лебедев ячĕллĕ лицейĕн, Кӳкеçри 27-мĕш професси училищин директорĕ пулнă. Яланах малта пыма тăрăшни, малашлăха пăхса ĕçлени, çĕнĕлĕхсемпе анлăн усă курни çитĕнӳсем тума пулăшнă. Механика-технологи техникумĕнче те вăл ертсе пыма пуçланăранпа ырă улшăну чылай пулнине палăртмалла. Çамрăксене паха професси пама, халăх хуçалăхне кирлĕ анлă тавра курăмлă специалистсем хатĕрлеме условисем çулран-çул лайăхланаççĕ. Паянхи çĕнĕлĕхсемпе техникумăн яваплă ĕçченĕсем тĕплĕнрех паллаштарма кăмăл турĕç.*



• *Техникум директорĕ Станислав Григорьев педколлективра çамрăк преподавательсен йышĕ ӳснипе кăмăллă.*

### Паха професси – пурнăç тĕрекĕ

**С.Г.АЛЮШИНА, директорăн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ:**

– Техникума тăххăрмĕшпе вун пĕрмĕш классенчен вĕренсе тухнă çамрăксене илетпĕр. Кăнтăрлахи тата куçăн мар уйрăмсем ĕçлеççĕ. Çичĕ специальноçпа професси пĕлĕвĕ паратпăр: реклама; товароведени тата потребитель таварĕсен пахалăхĕн экспертизи; экономика тата бухгалтери учечĕ; промышленноç оборудованине пухса вырнаçтарасси тата техника эксплуатацийĕ; автомобиль транспортне техника енчен пăхса тăрасси тата юсасси; информаци системисем; пир-авăр изделийĕсен технологийĕ. Ĕç рынокĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнма ĕмĕтленекен çамрăксем килĕшнине суйласа илме пултараççĕ. Пирĕн выпускниксен малашлăхĕ шанчăклă пулнине вĕсене предприяти-организацисенче хапăл тусах йышăнни витĕмлĕ çирĕплетет.

Ăс-хакăла, тавра курăма аталантарма, сывлăха çирĕплетме техникумра услови çителĕклĕ. Ял ачисем валли хăтлă общежити пур. Педколлектива пирĕн пата тăрăшса вĕренес кăмăллă çамрăксем йышлăнрах килме пуçлани савăнтарать. Пĕлтĕр, тĕслĕхрен, пĕр вырăна 3,5 çын пулчĕ. Пĕрремĕш курса чи пултаруллисене йышăнтăмăр. Лайăх вĕренеççĕ, тĕрлĕ мероприятие хастар хутшăнаççĕ. Çамрăксене тĕп профессипе пĕрлех рабочи профессийĕ /реклама агенчĕ, фотограф, ПЭВМ операторĕ, автомобиль юсакан слесарь, мастер пулăшуçи, пир тĕртекен, çип арлакан/ илме май пурри те илĕртет. Техникум 2004 çултанпа федерацин Атăлçи округĕнчи автомобиль транспорчĕн водителĕсене хатĕрлекен тата квалификацине ӳстерекен база центрĕ шутланать. Чăваш Енри автотранспорт предприятийĕсем валли кадрсем хатĕрлеме вĕренӳ-производство сервис центрĕ те уçрăмăр.

Паллах, чăн-чăн профессионалсем вĕрентсе кăларасси теорие практикăпа туллин çыхăнтарса пынинчен килет. Станислав Порфирьевич, пултаруллă менеджер, ертӳçĕ пулнă май, ку ыйтупа уйрăмах тимлĕ ĕçлет, пурлăх-техника никĕсне пуянлатас тĕлĕшпе нумай тăрăшать. Кабинетсемпе лабораторисенче вĕренӳ программисене алла илме кирлĕ оборудовани, учебниксем, меслетлĕх литератури, дидактика материалĕсем, кăтарту пособийĕсем çителĕклĕ. 9 компьютер класĕ, Интернет-сервер, мини-типографи, фотостуди, библиотека, спорт залĕ, тир, автопарк пур. Производство мастерскойĕсенче професси хăнăхăвĕ илме пулăшакан хальхи оборудовани вырнаçтарнă. Çак условисенче вĕрентме те, вĕренме те кăсăклă.

**Н.А.ВАСИЛЬЕВА, директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ:**

– Вырăс литературин классикĕн Лев Толстойăн сăмахĕсене аса илтерес килет. "Воспитани те, вĕрентӳ те пĕр-пĕринчен уйрăм пулма пултараймаççĕ. Пĕлӳ памасăр воспитани пама май çук, кирек мĕнле пĕлӳ те воспитани витĕмĕ кӳрет",– тенĕ вăл. Мĕн тери тĕрĕс каланă. Çак критерисем пирĕн ĕçре те пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнаççĕ. Пулас специалистсене этемлĕхĕн сăваплă пахалăхĕсене, культурăна, гражданин яваплăхне, сывă пурнăç йĕркине хаклама вĕрентес тĕлĕшпе тĕрлĕ меслетпе усă куратпăр. Техникумра студентсен хăй тĕллĕнлĕх канашĕ, профсоюз комитечĕ ĕçлеççĕ. Ăслăлăх, художество пултарулăх кружокĕсене, спорт секцийĕсене çӳрекенсен йышĕ ӳссех пырать. Пирĕн студентсем хула, республика, çĕр-шыв шайĕнчи олимпиадăсенче, конкурссенче, фестивальсенче, ăмăртусенче малти вырăнсене йышăнаççĕ. Сывă пурнăç йĕркине пропагандăлас ĕçре çамрăксен юхăмне аталантарни, тĕрлĕ акци-мероприяти ирттерни ӳсĕмсем тума пулăшать.

**Г.Н.ГРИГОРЬЕВА, "Реклама тата техника" уйрăм заведующийĕ:**

– Пирĕн уйрăмра паян ĕç рынокĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнакан реклама специалисчĕн тата автомобиль транспорчĕ юсакан техник профессийĕсене алла илме пулать. Шухăшласан, реклама техникăран аякра тăнăн туйăнать. Анчах хальхи вăхăтра унсăр нихăш сферăра та май çук. Çак енĕпе ĕçлекен специалистсем кирли çинчен пĕлтернине тăтăшах асăрхама пулать. Механика-технологи техникумĕнче пулас рекламистсен сакăр ушкăнĕ пĕлӳ пухать. Тăххăрмĕш класс хыççăн килнĕ çамрăксене тăватă çул хушшинче компьютер технологине, фото тата видеорекламăна, ӳнере, реклама психологине, литературăна, экономикăна, профессипе çыхăннă ытти предмета вĕрентеççĕ. Аслă курссене çитнĕ тĕле вĕсем хăйсем тĕллĕнех мультфильмсем, видеороликсем ӳкерме, автор ĕçĕсен куравĕсене йĕркелеме хăнăхаççĕ. Реклама ĕçне вĕренекен студентсем 2004 çулта никĕсленĕ пичет кăларăмĕ – сакăр страницăллă "От сессии до сессии" хаçат – техникум пурнăçне тĕплĕн çутатать, çамрăксене журналистикăпа литературăри пултарулăхне аталанатарма пулăшать. Пирĕн хаçат массăллă информаци хатĕрĕсен конкурсĕсенче çулсерен малти вырăнсене йышăнать, çĕнтерӳçĕ ятне ултă хут илчĕ. Пĕлтĕр "Çамрăксен хули" форумра техникумăн "Мы" иллюстраци-информаци хаçачĕпе республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев кăсăклансах паллашрĕ.

"Автомобиль транспортне техника енчен пăхса тăрасси тата юсасси" специальноçа аттестатсен конкурсĕпе вĕренме илетпĕр. Çак ĕçе килĕштеркен чылай, районсенчен уйрăмах йышлăн килеççĕ. Çамрăксем асăннă професси яланах кирлĕ пуласса лайăх ăнланаççĕ.

### Пултарулăха кура хакласçĕ

**С.Г.АЛЮШИНА, директорăн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ:**

– "Шкул-техникум-аслă шкул" татăлусăр вĕренӳ меслечĕпе нумай çул ăнăçлă ĕçленине палăртас килет. Техникумра вăтам професси пĕлĕвĕ илнĕ çамрăксене малалла вĕренме çул уçса паратпăр. Çĕр-шыври паллă аслă шкулсемпе килĕштерсе ĕçлетпĕр. Пирĕн выпускниксем паян Мускаври дизайн тата технологи университетĕнче, Мускаври В.С.Черномырдин ячĕллĕ патшалăх университетĕнче, Мускаври "МАМИ" патшалăх университетĕнче, Питĕрти патшалăх уçă университетĕнче, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче пĕлӳ илеççĕ. Çак кунсенче И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн представителĕсем пулчĕç, вĕренӳ программипе, студентсен пултарулăхĕпе паллашрĕç, пирĕн выпускниксене çăмăллăхпа вĕренме илес тĕлĕшпе килĕшӳ тума хатĕррине палăртрĕç.

**Л.Е.ДАРВИНА, директорăн вĕренӳ-производство енĕпе ĕçлекен çумĕ:**

– Юлашки çулсенче техникум директорĕ ĕçе çĕнĕлле йĕркеленĕ май социаллă партнерсен йышĕ ӳссех пырать. Вăтам професси пĕлĕвĕ экономикăра пысăк вырăн йышăнать. Хамăр ĕçе çакна шута илсе йĕркелетпĕр. Паян ĕç рынокĕнче тупăшулăх вăйлă пулин те пирĕн техникумра диплом илнĕ çамрăксем хăйсене ыттисенчен чылай шанчăкларах туяççĕ. Мĕншĕн тесен эпир вĕренӳ пахалăхне тĕп вырăна хуратпăр, производствăна чăннипех кирлĕ кадрсем хатĕрлетпĕр. Ĕç паракансем шăпах çакна хакласçĕ те ĕнтĕ. Техникум предприятисемпе, организацисемпе студентсен производство практикине вырăнта йĕркелеме, вĕсем валли специалистсем хатĕрлеме нумай вăхăтлăх килĕшӳсем тăвать. Ĕç паракан партнерсем техникум выпускникĕсем пĕлĕвĕпе, практикăра пухнă опычĕпе туллин усă курса производствăна хăвăрт хăнăхса çитнине, яваплă пулнине палăртаççĕ. Чăваш Енре агрегат, электроаппаратура завочĕсемпе, "Элара", "Лента", "Шупашкар трикотажĕ", "Чăвашавтотранс", "Акконд-транс" предприятисемпе çирĕп çыхăну тытатпăр. Ытти регионпа та ĕçлетпĕр. Халĕ акă Пушкăрт пир-авăр комбиначĕн пуçлăхĕсемпе калаçусем пыраççĕ. Çак предприятире специалистсем çитмеççĕ, çавна май пирĕн выпускниксене хăйсем патне чĕнеççĕ. Çĕр-шыв шайĕнчи куравсене хутшăнни те социаллă партнерсем тупма пулăшать. Кашни çулах Мускавра "Текстильлегпром" ирттерекен, Шупашкарта регионсен хушшинчи куравсене хутшăнатпăр, техникумпа тĕплĕн паллаштаракан стендсем йĕркелетпĕр.

**С.П.ГРИГОРЬЕВ, техникум директорĕ:**

– Пасар экономикин тытăмĕ питĕ хăвăрт улшăнса, çĕнелсе пырать. Специалистсем хатĕрлес ĕçре çак улшăнусене вăхăтра асăрхани, тивĕçлĕ йышăнусем туса пурнăçпа тан утни пĕлтерĕшлĕ. Техникум коллективĕ çакна лайăх ăнланать, вĕренӳ стандарчĕсене тĕпе хурса, паха меслетсене алла илсе ĕçлеме тăрăшать. Ĕçтешсемпе тивĕçлипех мухтанма сăлтав çителĕклĕ. Пысăк квалификациллĕ педагогика коллективĕ 64 преподавательпе 10 производство мастерне пĕрлештерет. Çав шутра – педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ, техника ăслăлăхĕсен кандидачĕ, çичĕ РФ вăтам професси вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ, виçĕ ЧР тава тивĕçлĕ учителĕ. 24 педагог – Раççей Вĕренӳпе ăслăлăх министерствин, 7 педагог Чăваш Ен Вĕренӳпе çамрăксен политикин министерствин Хисеп хучĕсене тивĕçнĕ. Кадрсен квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе вĕсене кашни виçĕ çулта пĕрре производство предприятийĕсене стажировкăна яратпăр.

Ӳсĕмсем – куç умĕнче. Пирĕн ĕçе асăрхаççĕ, ырласа хакласçĕ. Юлашки çулсенчи сумлă çитĕнӳсенчен хăшĕ-пĕринпе паллаштарар-ха. 2010 çулта "Текстильлегпромăн" ярмăркккинче техникума специалистсем хатĕрлес ĕçри пысăк кăтартусемшĕн Пĕтĕм Раççей курав центрĕн дипломĕпе наградăларĕç. 2007, 2008, 2010, 2011, 2013 çулсенче вăл "Европа пахалăхĕ" Ылтăн медаль" конкурсăн "Раççейри чи лайăх 100 ятарлă вăтам вĕренӳ заведенийĕ" номинацийĕнче ылтăн медале тивĕçрĕ. 2010-2011 çулсенче техникум музейĕ Пĕтĕм Раççейри професси вĕрентĕвĕн учрежденийĕсен музейĕсен конкурсĕнче çĕнтерчĕ. 2011 çулта пирĕн вĕренӳ заведенине "Наци пахалăх палли" конкурс лауреачĕн ятне пачĕç. 2012 çулта техникум коллективне республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев педагогика ĕçхĕлĕнчи çитĕнӳсемшĕн тата квалификациллĕ специалистсем хатĕрленĕшĕн тав турĕ, 2013 çулта 200 пин тенкĕлĕх грант уйăрса пачĕ. Çак çулах студентсен "Импульс" команди республикăри "Çамрăк талантсем" фестивальре çĕнтерчĕ...

Пĕлтерĕшлĕ тепĕр çитĕнӳ те хавхалантарать. Раççей Федерацийĕн Вĕренӳпе ăслăлăх министерстви çумĕнчи Професси вĕрентĕвĕн учрежденийĕсен выпускникĕсене ĕçе вырнаçма пулăшас енĕпе ĕçлекен координаци-аналитика центрĕ кашни çулах вырăнти центрсен ĕç-хĕлне пĕтĕмлетет. 2012-2013 вĕренӳ çулĕн мониторингĕн кăтартăвĕсемпе пирĕн техникумăн выпускниксене ĕçе вырнаçма пулăшакан центрĕ вăтам професси пĕлĕвĕ паракан вĕрентӳ организацийĕсем хушшинче Раççейре 14-мĕш, Чăваш Енре 1-мĕш вырăн йышăнчĕ. Ку механика-технологи техникумĕн дипломне илнĕ çамрăксен малашлăхĕ шанчăклă пулнине, вĕсем валли ĕç вырăнĕсем яланах пуррине тепĕр хут çирĕплетет.

Сăмах май, çак кунсенче чикĕ леш енчен таврăнтăм. Беларуçре, Польшăра, Германире, Швейцарире стажировкăра пултăм. Беларуçре вĕренӳ тытăмĕ пирĕн çĕр-шыври майлах, унта та ресурс центрĕсем йĕркелеççĕ. Швейцарире вара, манăн шухăшпа, хăш-пĕр енĕпе вĕренмелли пур. Тĕслĕхрен, эпир тăлăхсене çăмăллăхпа вĕренме илетпĕр. Вĕсене патшалăх пособи парса пулăшать. Анчах, шел те, чылайăшĕ хăйсемшĕн тăрăшнине хаклама пĕлмест: занятисене тăтăшах сиктерет, япăх вĕренет. Швейцарире вĕсене професси илме пулăшассине урăхла йĕркеленĕ. Малтан ĕç параканпа килĕшӳ тăваççĕ, унтан тин вĕренӳ заведенине пыраççĕ. Çавна май çамрăксенчен кашниех занятисене йĕркеллĕ çӳремесен, специальноçпа тивĕçлĕ диплом илмесен малашне ĕç вырăнĕ те, патшалăх пулăшăвĕ те тивĕçмессине лайăх ăнланать. Пирĕн те çак ыйтупа йĕрке тума, çамрăксен яваплăхне ӳстермелли мерăсем йышăнма тахçанах вăхăт çитнĕ. Вĕрентӳре, уйрăмах професси пĕлĕвĕ парас тытăмра, çĕнетмелли сахал мар. Пĕрлехи вăйпа чылай ыйтăва уçăмлатма май килессе шанатăп.



Анатолий АБРАМОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.

• *"Пирĕн техникум чи лайăххи!"*

**Алина ЛУКИЯНОВА.**

*Лиц. РО № 046640 от 20.04.2012, выд. Министерством образования и молодежной политики ЧР*

*Пĕтĕмлетӳ*

# Пултаруллисене чысларĕç

*Çак кунсенче Чăваш наци библиотекинче «Чи нумай вуланă кĕнеке – 2012» республика конкурсĕн çĕнтерӳçисене палăртрĕç.*

Чыслава республикăн тĕп вулавăшĕн директорĕ Светлана Старикова, ЧР Профессионал писательсен союзĕн председателĕ Сергей Павлов уçрĕç. Вĕсем пухăннисене кĕнеке уявĕпе тата Чăваш чĕлхин кунĕпе саламларĕç. Мероприятие жюри членĕсем, çыравçăсем, вулакансем, библиотекарьсем, журналистсем хутшăнчĕç.

Çапла вара «Проза» номинацире Улькка Эльменĕн «Упраймарăм сана...» чăвашла кĕнеки, вырăсла çырнисенчен чи нумай сасă пухса Федор Уярăн «Близ Акрамова» роман çĕнтернĕ. «Асамлă йĕрке» номинацире Порфирий Афанасьевăн «Каçхи кăвайт» сăвă кăларăмĕ, вырăслисенчен Любовь Петровăн «И грусть, и радость, и мечты» кĕнеки мала тухнă. «Ачапăча тĕнчи» номинацире вулакансем Юрий Сементерĕн «Килĕр, килĕр, кайăксем», Светлана Гордеевăн «Веселая карусель – Хаваслă карусель» кĕнекисене ытларах килĕштернĕ. Нелли Петровскаян «Тухатмăшĕ», Анатолий Смолинăн «Асамлă азбуки» лауреат дипломĕсене тивĕçнĕ.

«Кĕнекен тĕп хули» номинацире Комсомольскинчи тĕп библиотека çĕнтернĕ. Вĕсем асăннă конкурса пуринчен те лайăхрах йĕркеленипе палăрнă. Канаш хулинчи тĕп вулавăш вара – асăннă номинацин лауреачĕ. «Чи лайăх буктрейлер» номинацире Элĕк районĕнчи – Питĕшкассинчи, Çĕмĕрлери, Пăрачкаври, Етĕрнери тĕп вулавăшсем мала тухнă.



• *Лауреатсен пĕр ушкăнĕ.*

Кăçал пуринчен нумай кĕнеке вулакансен йышĕнче Комсомольскинчи 1-мĕш шкулта вĕренекен Елизавета Зайцева, Муркаш районĕнчи Йӳçкассинчи шкулта ăс пухакан Ирина Федорова, Элĕк районĕнчи Чăваш Сурăмри Вячеслав Михайлов уйрăмах палăрнă. Элĕк районĕнчи Ураскилтри шкулта 7-мĕш класра вĕренекен Ксения Григорьева, Муркаш районĕнчи Ильинкăри пĕлӳ çуртĕнче 7-мĕш класра ăс пухакан Анастасия Иванова, Муркашри пĕлӳ çуртĕнче вĕренекен Ангелина Крючковăпа Анна Зайцева, Элĕкри И.Я.Яковлев ячĕллĕ шкулта 8-мĕш класра ăс пухакан Елена Тайгильтова конкурс дипломанчĕсем пулса тăнă. Кĕнеке вулама уйрăмах юратакансене, конкурса хастар хутшăнакансене йĕркелӳçĕсем Чăваш наци библиотекин Тав çырăвĕсемпе чысларĕç. Хальхинче вĕсене Ксения Семенова /180 кĕнеке/, Анна Николаева /192 кĕнеке/, Майя Илларионова /118 кĕнеке/ тивĕçнĕ.

Вулав культурине аталантарнăшăн, конкурса хастар хутшăннăшăн Элĕкри тата Муркашри тĕп вулавăшсем те Тав çырăвĕсемлĕ пулчĕç. Çĕнтерӳçĕсене пурне те дипломсемпе, парнесемпе тата кĕнеке пуххисемпе чысларĕç.

**Наталия МЛАДШИНА**

*Çитĕнӳ*

# Алексей Германовăн – икĕ «ылтăн»

*Суздальте спорт аэробики енĕпе иртнĕ çĕр-шыв чемпионатĕнчен пирĕн ентешсем медальсемпе таврăннă. Ăмăртура 35 регионти 1000 ытла спортсмен вăй виçнĕ.*

Ку хутĕнче те чемпионатра Чăваш Енри чи пултаруллă аэробиста, Раççей спорт мастерне Алексей Германова уйрăмах ăннă. Шупашкарти политехника институчĕн студенчĕ команда пухмачне икĕ ылтăн тата пĕр кĕмĕл медальпе пуянлатнă. Вăл «соло» тата «гимнастика платформи» номинацисенче – пĕрремĕш, ушкăнсен тупăшăвĕнче иккĕмĕш вырăн йышăннă. Республикăри спорт аэробикин федерацийĕн ертӳçин Оксана Дьячукăн воспитанникĕ çĕртме уйăхĕнче Мексикăра иртекен тĕнче чемпионатне кайма путевка çĕнсе илнĕ. Уяв вăхăтĕнчех çĕр-шыв тата тĕнче чемпионачĕсенче пĕрре мар çĕнтернĕскере пĕлтĕр Пĕтĕм тĕнчери вăййăсенче палăрнăшăн РФ Спорт министерствин Тав хучĕпе чысланă.

Çамрăк спортсменсен ăмăртăвĕнче Катя Алюновăпа Яна Баранова пĕчĕк хĕрсем тĕрлĕ номинацире кĕмĕл медальсене тивĕçнĕ, Яна Янова спорт мастерĕн нормативне тултарнă.



# Пуянлăх, илемлĕх тĕнчинче...

*Çĕнĕ Шупашкарти Н.И.Полоруссов-Шелепи ячĕллĕ вулавăшра çамрăк вулакансем валли «Чăваш халăхĕн ăс-хакăлĕпе сапăрлăхĕ» литература каçĕ иртнĕ. Ăна Культура çулталăкĕнче ирттерекен «Илемлĕх тĕнчинче» конкурса хатĕрленсе йĕркеленĕ.*

Мероприятин тĕп тĕллевĕ – çамрăк ăрăва чăваш наци культурипе, йăли-йĕркипе, искусствипе ытларах паллаштарасси, ытти халăх çыннисене хисеплеме вĕрентесси.

Пирĕн ытарайми тăрăха çĕр пин сăмах, çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ çĕр-шывĕ теççĕ. Ун пирки çамрăк вулакансене Асанне /мероприяти ертӳçи/ «Юратнă тăрăхăм» презентацире каласа панă. Унтан вăл вĕсене пуян та нумай енлĕ чăваш фольклорĕн уявне «ертсе кайнă». Пухăннисем пурте пĕрле чăваш тумне тăхăнса вăйă картине тăнă, юрланă-ташланă, «Çăпаталла» вăйă выляна. Унтан, кăштах сывлăш çавăрмалла тенĕ пек, «Чăваш халăхĕн музыка инструменчĕсем» курава пахаланă. Шăпăр пирки сăмах пуçарсан М.Спиридоновăн «Пузырист» картинипе тата В.Черновăн «Чувашские музыкальные инструменты» кĕнекинчи иллюстрацисемпе паллашнă.

Чăваш хĕрĕсем яланах тĕрлеме юратнă. Авал тĕрленĕ япала чир-чĕртен сыватать, çурта упрать, кил хуçисене инкеке лекесрен сыхлать тесе шухăшланă. Пӳрте хуйхă, чир пырса ан кĕтĕр тесе тĕрленĕ ал шăллине алăк çине те çакнă, чӳрече каррисене те тĕрлесе илемлетнĕ. Тĕрĕллĕ виткĕç сĕтеле тата апат-çимĕçе упранă. Пуçа тăхăнмалли капăрчăксемпе тĕрленĕ кĕпесем те çынна усал-тĕселтен сыхланă. Тĕрленĕ япалана арчара тытнă. Асанне ача-пăчана сурпан, хушпупа тухья çинчен те тĕплĕн каласа панă. «Чăваш наци тĕрри» выставкăпа паллашнă май вара чăвашсем тĕрленĕ чухне ытларах мĕнле тĕссемпе усă курнин вăрттăнлăхĕсене уçнă.

**А.ГРОМОВА**

КРИМ

## Ака, 28: Пĕтĕм тĕнчери ĕç сыхлавĕн кунĕ

# Ĕçре – вăрçăри пек-и?

***Çапла, вăрçă-хирĕçÿ мар вĕт – ĕçре çын суранланни е вилни пулмалла мар пек. Анчах чăнлăх урăхларах. Аманаççĕ те, вилеççĕ те. Пĕтĕм тĕнчери ĕç сыхлавĕн кунĕ умĕн Следстви комитечĕн Шупашкарти пайĕн ертÿçипе Константин КАНДАСОВПА шăпах çак темăпа калаçрăмăр.***

Çысене ĕçĕн хăрушлăхсăр условийĕсемпе тивĕçтерессиі – граждансен Конституцире çирĕплетнĕ прави. Ăна уямаççĕ тĕк – Следстви комитечĕн представителĕсем валли ĕç пуласси те часах. Константин Анатольевич палăртнă тăрăх – Уголовлă кодексăн 143 статйинче /ĕç сыхлавĕн правилисене пăснă май асăрханмасăр çын сывлăхне йывăр сиен е вилĕм кÿни/ пăхнă преступленисене тĕпчесси вăл ертсе пыракан пай ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнать теме те юрать. Ку ĕçе ЧР Патшалăх ĕçлев инспекцийĕпе тачă çыхăну тытса пурнăçлаççĕ.

2013 çулта следстви пайĕ çавнашкал уголовлă 14 ĕçе тĕпченĕ /çулталăк маларах ку кăтарту икĕ çут пĕчĕкрех пулнă – 7 ĕç/. 2014 çул пирки те "хурлăхлă" темелле: виçĕ уйăхрах производствăра суранланнин тĕслĕхĕсемпе уголовлă 9 ĕç пуçарма тивнĕ. Инкексем строительствăра, промышленноç производствинче, транспорт, электроэнергетика сферисенче пулнă.

Виçĕ тĕслĕх – çынсен вилĕмĕпе çыхăннăскерсем. Судсем приговор та палăртнă ĕнтĕ. Сăмахран, Шупашкарти Калинин районĕн сучĕ строительство организацийĕн 26 çулти мастерне айăплаласа условнăй майпа 2 çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварнă. Инкекĕ вара пĕлтĕрхи авăн уйăхĕн 28-мĕшĕнче Шупашкарти Ярмăркка урамĕнчи строительство объектĕнче пулнă. Бытовкăра кăнтăр кунĕнчех пушар тухнă. Унта пулнă стропальщик тĕтĕм-сĕрĕмпе наркăмăшланса вилнĕ. Тĕпчев çирĕплетнĕ тăрăх – предприяти мастерĕ пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене пăснă – бытовкăра ТЭН текен ăшăтакан хатĕрпе усă курма ирĕк панă. Унтах тумтир, атă-пушмак типĕтнĕ. Çав кун ирхине стропальщик ÿсĕр пулнă та – ăна ĕçлеме ирĕк паман. Анчах арçын килне кайман, бытовкăна кĕнĕ те выртса çывăрнă. Темиçе сехетрен унта пушар тухнă...

Ленин районĕн сучĕ Богдан Хмельницкий урамĕнче çурт-йĕр çĕклекен организацин аслă прорабне айăпланă. Ăна та условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварнă – çулталăк çурăлăха. Раштавăн 25-мĕшĕнче 14 сехет çурă тĕлнелле 51 çулти сварщик асăннă микрорайонта çĕклекен çуртăн 9-мĕш хутĕнчен пусма тăрăх анма тăнă. Шуса кайса лифт шахтин виткĕчĕ çине ÿкнĕ. Çав виткĕч çын йывăрăшне тÿсеймен, сварщик вара 9-мĕш хут çÿллĕшĕнченех шахтăна ÿкнĕ. Паллах, чĕрĕ юлма пултарайман, çавăнтах вилнĕ.

Следстви çак инкек аслă прораб ĕç сыхлавĕн правилисене, хăрушсăрлăх техникине тивĕçтерменнипе сăлтавланине çирĕплетнĕ. Тин çеç монтаж тунă пусмасене, лифт шахтине çирĕп карлăксемпе хÿтĕлемелле, шăтăка шанчăклă щитпа хупласа ятарлă хăрушсăрлăх палли çакмалла пулнă – çапла туман.

Ленин районĕн судĕнчех тишкернĕ тепĕр ĕç – тимĕр-бетон конструкцисем кăларакан предприятин участок пуçлăхĕпе çыхăннăскер. Ăна 20 пин тенкĕлĕх штрафланă. Ку инкек пĕлтĕрхи нарăсăн 7-мĕшĕнче ирхине пулнă. Лапсар тăкăрлăкĕнче вырнаçнă çав предприяти территорийĕнче вакунран вак чул пушатнă чухне 58 çулти рабочи вилнĕ. Вăл тулли вакун çине хăпарнă, çав самантра вакун тĕпĕнчи люксем уçăлса кайнă. Çавна май арçын вак чулпа пĕрле аяла анса кайнă. Ĕçтешĕсем, çакна курнăскерсем, ăна чул айĕнчен чавса кăларнă-ха, анчах – кая юлнă... Ку тĕслĕхре те вак чул пушатассишĕн яваплă çын çăмăлттайлăхĕ айăплă.

Яваплăх тенĕрен, К.Кандасов ĕç сыхлавĕн правилисене пăснă май çынсем вилнĕ е суранланнă тĕслĕхсенче судсем лару-тăрăва кура айăплисене ытларах чухне штрафлани е ĕçлесе юсанмалли приговорсем палăртни çинчен калать. Йĕркене пăснисем хăйсен айăпне йышăнаççĕ, çавăнпа уголовлă ĕçсене уйрăм йĕркепе тишкереççĕ. Çынсене ирĕклĕхсĕр хăварнă тĕслĕх сайра, мĕншĕн тесен 143 статьян 1, 2-мĕш пайĕсенче пăхнă преступленисем – асăрханмасăр тунисен шутĕнче. Унсăр пуçне çÿлерех асăннă тĕслĕхсенче айăплисем пирки ырлакан характеристикăсем панă, вĕсем маларах судпа айăпланман.

Константин Анатольевич палăртсах калать: айăплани кăна çителĕксĕр, кашни тĕслĕхре следовательсем инкеке сăлтавланă условисене уçăмлатаççĕ, тивĕçлĕ представленисем çыраççĕ. Çакă та ахаль иртмест. Пĕлтĕр çав представленисене тишкерсе 3 çынна дисциплина енĕпе явап тыттарнă.

Кашни тĕслĕх хыçĕнче – асăрханусăрлăх, тимлĕхе çухатни, çăмăлттайлăх. Яваплă çынсем хăйсене пăхăнса тăракансем хăрушсăрлăх техникине пăхăннине сăнаса тăмаççĕ, вĕсене хÿтлĕх хатĕрĕсемпе тивĕçтермеççĕ, тивĕçлĕ инструктаж ирттермеççĕ, юсавсăр оборудованипе усă кураççĕ, тепĕр чух ÿсĕрсене ĕçе явăçтарни те тĕл пулать. Акă, следстви пайĕ çак кунсенче кăна уголовлă тепĕр ĕçе тĕпчесе пĕтернĕ. Каллех строительство организацийĕн прорабĕ суд умне тăрĕ. Инкек вара пуш уйăхĕн 30-мĕшĕнче ирхине Шупашкарăн кăнтăр енчи çĕнĕ районĕнче пулнă. Çумăр шывне юхтарса ямалли канализаци пăрăхĕн траншейинче ĕçленĕ чухне 32 çулти платник çине тăпра ишĕлсе аннă. Юрать-ха, ĕçтешĕсем юнашарах пулнă та – арçынна часах чавса кăларнă. Анчах унăн аяк пĕрчисем, пĕçĕ шăмми хуçăлнă – сывлăхне йывăр сиен кÿнĕ.

■ **Николай ДМИТРИЕВ**

## Яваплăх

# Пулла – вăлтапа кăна

***Шалти ĕçсен министерствин транспорт çинчи Чăваш лини пайĕн дознани уйрăмĕ Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан 24 çулти каччă тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Вăл саккуна пăсса пулă тытнăшăн явап тытать.***

70 метр тăршшĕ, 1,5 метр çÿллĕш сĕрекепе çамрăк çын Шупашкар ГЭСĕн чару зонинче пулă тытнă. Унран алла яхăн пулă туртса илнĕ: уланкă, çуйăн, карас тата ыт. те. Йĕкĕте Уголовлă кодексăн 256 статйин 1-мĕш пайĕпе айăплаççĕ – шыври биологи ресурсĕсене саккуна пăсса тытнăшăн. Ку статьяпа яваплăх самай çирĕп: 300 пин тенкĕлĕх е хăйĕн 2 çул таран тапхăрти тупăшĕ чухлĕ штрафлама кăна мар, 2 çул таран юсанмалла ĕçлеттерме е 6 уйăх таран арестлеме те пултараççĕ.

Тепĕр тесен пакунлисем браконьерсене тытса чарнă тĕслĕхсем халь куллен тенĕ пек пулаççĕ. Çанталăк ăшăтрĕ те – нумайăшĕ пулла каяс шухăшпа авăрланать. Ака уйăхĕн 22-мĕшĕнче, сăмахран, лини пайĕн сотрудникĕсем "Лантăш" кану бази патĕнче /Сосновка поселокĕ çывăхĕнче/ Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан икĕ çамрăка тытса чарнă. Вĕсем "китайка" текен сĕрекесемпе Атăлта 200 ытла пулă тытнă.

Çав кунах Шупашкар районĕнче "Хĕвеллĕ çыран" кану базинчен 4 километртра Вăрманкас ялĕн çынни полици аллине çакланнă. Вăл та сĕрекепе пулă тытнă, унран 93 пулă туртса илнĕ. Асăннă тĕслĕхсемпе тĕрĕслев ирттерсе пырать, УК 256 статйипе уголовлă ĕç пуçарас ыйтăва татса параççĕ.

Çийĕнчен лини пайĕн массăллă информаци хатĕрĕсемпе çыхăну тытакан инспектор Светлана Егорова хаçат урлă тепĕр хут аса илтерме ыйтрĕ: ака уйăхĕн 10-мĕшĕнчен тытăнса республика территорийĕнче мĕн пур биоресурса тытма чарнă. Çыран çинчен вăлтапа кăна пулă тытма юрать. Вăлта тĕлĕшпе те чарусем пур: пĕр çын пуçне 2 вăлта йĕппинчен ытла пулмалла мар.

Чару вăхăтĕнче транспорт полицийĕн подразделенийĕсем пулă вăлча сапма куçакан çулсем çинче, вăлча сапакан вырăнсенче рейдсем ирттереççĕ. Пулă сутакан вырăнсене те тимлĕхсĕр хăвармĕç: пулла ăçтан кÿнĕ, ăçта тытнă – пĕтĕмпех тĕрĕслĕç. Чару тапхăрĕ икĕ уйăха тăсăлать, çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕнче вĕçленет.



● *Пулăра лайăх – саккуна пăсмасан…*

ШĔМĕн транспорт çинчи Чăваш лини пайĕн яваплăхĕн зонине Мари Эл Республикин территорийĕн пĕр пайĕ те кĕрет. Кÿршĕ республикăра та пулă тытма чарнă вăхăт икĕ уйăха тăсăлать, анчах вăл кăшт каярах пуçланнă, çавна май çĕртме уйăхĕн 15-мĕшĕнче вĕçленет.

Пулă тытма чарнăранпа Чăваш лини пайĕн сотрудникĕсем саккуна пăснин 17 тĕслĕхне тăрă шыв çине кăларнă ĕнтĕ. Вĕсем тăрăх уголовлă 8 ĕç пуçарнă, административлă 9 протокол çырнă. Тепĕр тесен браконьер пурнăçĕ çак тапхăрта çеç мар, ытти чухне те шикленÿллĕ. Çулталăк пуçланнăранпа полици саккуна пăсса пулă тытнин 186 тĕслĕхне тупса палăртнă. Пуçарнă уголовлă ĕçсем – 19, ытти 167 тĕслĕхре айăплисем административлă майпа явап тытаççĕ.

■ **Н.АНТИПОВ**

## Ыйту-хурав

### Колони пуçлăхĕ хавхалантарать

**Упăшка айăплав вăхăтне Раççей ФСИНĕн республикăри управленийĕн юсанмалли 9-мĕш колонийĕ çумĕнчи колони-поселенире ирттерет. Мĕнле тĕслĕхсенче ăна кану кунĕсене тата уяв умĕнхи кунсене учреждени тулашĕнче ирттерме ирĕк параççĕ?**

**С.ФЕДОРОВА.**

Ыйтăва **ЧР юсанмалли учрежденисенче саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан прокурорĕн пулăшуçи Д.Алексеев** хуравларĕ:

– РФ УИКĕн 113 статйин 2-мĕш пайĕпе килĕшÿллĕн кану кунĕсене тата уяв умĕнхи кунсене юсанмалли учреждени тулашĕнче ирттерме ирĕк пани – айăпланнисене хавхалантармалли мера, çавна май унпа ристансем колонире хăйсене лайăх тытсан, ĕçе тÿрĕ кăмăлпа пурнăçланăшăн, вĕреннĕшĕн, воспитани мероприятийĕсене хастар хутшăннăшăн хавхалантарма усă кураççĕ.

Çак мерăпа усă курасси – колони пуçлăхĕн прави.

### Усă курнăшăн та...

**Илтнĕ тăрăх – наркотиксемпе усă курнăшăн айăпламаççĕ. Манăн юлташа вара 5 талăклăха хупрĕç. Мĕншĕне хăй каламасть, анчах эпĕ пĕлетĕп: тест вăл наркотикпе усă курнине палăртнă. Çавăншăн темиçе талăклăха хупаççĕ-и вара?**

**С.КОВАЛЕВА.**

**Федерацин наркотĕрĕслев службин республикăри управленийĕнчен** пĕлтернĕ тăрăх – наркотиксемпе усă курнăшăн айăпламаççĕ тени тĕрĕс мар. РФ Административлă правăна пăсни çинчен калакан кодексĕн 6.9 статйинче çапла çирĕплетнĕ: врач сĕнмесĕр наркотик хатĕрĕсемпе е психотроплă хутшăсемпе усă курнăшăн административлă майпа 4-5 пин тенкĕлĕх штрафлаççĕ е 15 талăк таран административлă майпа арестлеççĕ.

### Штрафа тÿлемесен мĕн пулĕ?

**Водитель удостоверенине илнĕ май машинăпа çÿреме тытăнтăм кăна – çул-йĕр правилисене пăснăшăн штрафлама та ĕлкĕрчĕç. Штрафа тÿлемесен мĕн пулать?**

**Е.ЗАЙЦЕВ.**

Водитель удостоверенине тин кăна илнĕ пулин те çыру авторĕ хăйĕн ыйтăвне ахаль те пĕлме тивĕç. ПАИре тыттаракан экзамен билечĕсенче те кунашкал ыйту пур-çке. Юрĕ, пур пĕр хуравлар.

**ШĔМĕн çул çÿрев хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕн управленийĕнчен** пĕлтернĕ тăрăх – административлă майпа явап тыттарнă çыннăн штрафа административлă майпа штрафлани çинчен калакан йышăну саккунлă вăя кĕнĕ кун хыççăн 30 кунран кая юлмасăр тÿлемелле.

Штрафа тÿлениине ĕнетерекен документ, Патшалăх тата муниципалитет тÿлевĕсем çинчен калакан информаци тытăмĕнче штрафа тÿленине çирĕплетекен информаци çук тăк уксана çын хăй ирĕкĕпе татмалли вăхăт иртсен йышăну тунă должноçри çын административлă штраф çинчен калакан йышăнăва уксана ирĕксĕрлесе шыраса илмешкĕн суд приставне ярса парать. Çавна май йĕркене пăснă çын тĕлĕшпе РФ КоАПĕн 20.25 статйипе /административлă штрафа вăхăтра тÿлеменни/ хушма административлă материал хатĕрлеççĕ. Çак материала суда ăсатаççĕ, судья вара тÿлемен штрафăн икĕ виçи чухлĕ тепĕр штраф палăртать е 15 талăк таран административлă арест мелĕпе те усă курма пултарать.

■ **Н.КОНОВАЛОВ**

**ыйтса пĕлнĕ**

● ➡ 12 стр.

### Миграци

# Кам эс, ăçтан эс?

***Федерацин миграци службин республикăри управленийĕн Улатрăти пайĕн сотрудникĕсем вырăнти полиципе пĕрле хулари КПМра Узбекистанăн 15 тата Кăркăстанăн 1 гражданинне тытса чарнă** /сăн ÿкерчĕкре/. **Пурте Раççей Федерацийĕн территорийĕнче пулмалли йĕркене пăснă.***



Пурне те 2-шер пин тенкĕлĕх штрафланă. Унсăр пуçне Узбекистанран килнĕ 8 "хăна" тĕлĕшпе КоАПăн 18.8 статйипе те административлă материалсем хатĕрленĕ. Ку статья санкцийĕ "хакĕпе" те пысăкрах – 5 пин тенкĕ таран штраф, çийĕнчен Раççей тулашне кăларса яраççĕ.

Саккунсăр миграци ыйтăвĕ çивĕччи паллă. Ахальтен мар ĕнтĕ патшалăх "резина" хваттерсемпе çыхăннă ыйтупа çине тăрсах ĕçлеме пуçларĕ. Çав хваттерсенче граждансем пурăнас тĕллевпе мар, хăйсем кунта килнине легализацилеме регистрациленеççĕ. Унашкал пÿлĕмсемпе хваттерсем хуçисене самай пысăк услам кÿреççĕ.

ФМСăн республикăри управленийĕн сотрудникĕсем пусăм тусах палăртаççĕ: суя регистраци те – преступлени. Унашкаллине тупса палăртсан ячĕшĕн тенĕ пек регистрациленĕ çынна регистрацирен кăларнипе кăна ĕç-пуç вĕçленмест. Саккуна суя регистрацие чарас тĕллевлĕ улшăнусем кĕртнĕ, çавна май регистраци тата миграци правилисене пăснăшăн яваплăх та çирĕпленет.

Пурăнакан е пулакан вырăнта Раççей гражданĕсене улталаса регистрациленĕшĕн 500 пин тенкĕ таран штрафлама кăна мар, 3 çул таран ирĕклĕхсĕр хăварма та пултараççĕ. Ют çĕр-шыв гражданĕсене е гражданлăхсăр çынсене улталаса регистрацилесен те саккунпа килĕшÿллĕн явап тытма тивĕ. Сăмах граждансем çав вырăнта пурăнас тĕллевсĕрех суя кăтартусене тĕпе хурса регистрациленĕ тĕслĕхсем пирки.

ФМС управленийĕнче тепĕр самант пирки те асăрхаттараççĕ: Раççейĕн пурăнакан е пулакан вырăнта регистрацисĕр пурăнакан, çавăн пекех паспортсăр пурăнакан гражданĕсен административлă яваплăхне те çирĕплетнĕ. Унччен кунашкаллишĕн 1,5-2,5 пин тенкĕ штраф пулнă, халĕ çак виçе – 2-3 пин тенкĕ. Хуçи хăйĕн пÿлĕмне е хваттерне тепĕр çынна пурăнма яни, вăл регистрациленмесĕрех унта пурăнни çинчен регистраци органĕсене вăхăтра пĕлтермесен те 2-3 пин тенкĕ штраф тÿлеме тивет. Юридици вăйĕнчи тытăмсен – 4-7 пин тенкĕ. Паллах, сăмах уголовлă майпа явап тыттарма палăртман тĕслĕхсем пирки пырать. Преступлени шутланакан тĕслĕхсенче яваплăх чылай çирĕпрех терĕмĕр.

■ **Н.СТЕПАНОВ**

# Ха-ха-ха! Ахăлтатса кулар-ха!

**Суд ларăвĕн тăхтавĕнче адвокат хăй хÿтĕлекен çынна ÿпкелешсе калать:**

**– Эпĕ хам мĕн тума пултарнине пĕтĕмпех турăм, сана тÿрре кăлармалли мĕн пур аргументпа усă куртăм. Пĕлместĕп, тата мĕн тума пулать?..**

**– Эсĕ айăпа хăвăн çине илме пултаратăн.**

* * *

**Уголовлă шырав управленийĕн пуçлăхĕ хăйĕн икĕ сыщикне, вĕсем йĕрленĕ хăрушă преступнике тартнăскерсене, чĕнсе илет, тарăхса ыйтать:**

**– Эсир управленири чи лайăх сыщиксем вĕт! Петрова мĕнле тартрăр-ха?**

**– Вăл кинона кайрĕ…**

**– Вара мĕн?**

**– Эпир вара çав фильма эрне каяллах пăхнăччĕ те – унта каяс мар терĕмĕр.**

* * *

**Пĕр арçын шалу илнĕ те – каçхине килнелле утать. Ăна вăрăсем тапăнаççĕ, укçине туртса илеççĕ. Арçын пăшăрханать: укçа çук – мĕнле пурăнмалла? Темиçе кун иртсен алăка шаккаççĕ. Уçать те – хайхи вăрăсем иккен. Вĕсем вăрланă енчĕке тавăрса параççĕ, арçын укçине шутлать – пĕтĕмпех вырăнта. Тĕлĕнет:**

**– Ăнланаймастăп – мĕншĕн тавăрса паратăр?**

**– Укçуна каялла ил. Санăн шалăву ытла та пĕчĕк – эпир виçĕ кун чарăнмасăр култăмăр, пĕри кула-кула вилсех кайрĕ.**

* * *

**– Эсир тĕрмерен мĕншĕн тарнă? – ыйтать прокурор айăпланаканран.**

**– Ирĕке тухса авланасшăнччĕ.**

**– Ирĕклĕх тенине эсир тĕрĕсех ăнланмастăр иккен.**

* * *

**Икĕ рецидивист тĕл пулнă.**

**– Тусăм, кану кунĕсенче мĕн тăватăн?**

**– Тĕрмене каясшăн.**

**– Хăвăн ирĕкÿпех-и? Аташрăн-им?**

**– Аташман, тăвансемпе, çывăх çыннăмсемпе пĕрле пулас килет – çавă çеç.**

* * *

**– Пачăшкă, эпĕ турă вĕрентнĕ пек тĕрĕс пурăнма пуçларăм пулас: табак туртмастăп, эрех ĕçместĕп, вăрламастăп, хĕрарăмсем çине пăхмастăп. Çывăрма куллен каçхине 10 сехетре выртатăп, кашни вырсарни кун чиркĕве килетĕп…**

**– Ывăлăм, каçар та, анчах ку вăрахлăха мар пуль, тĕрмерен тухсанах улшăнмăн-и?**

* * *

**Колонире ларакан упăшкипе курнăçнă хыççăн арăмĕ юсанмалли учреждени пуçлăхĕ патне кĕрет, мăшăрне çăмăлрах ĕç пама ыйтать.**

**– Вăл хут хутаççем кăна çыпăçтарать вĕт – ĕçĕ ахаль те питĕ çăмăл, – тĕлĕнет колони пуçлăхĕ.**

**– Упăшка вара мана кăнтăрлахи ĕçсĕр пуçне каççерен те темле тоннель чаватăп терĕ.**

* * *

**Судья свидетеле тĕпчет:**

**– Сирĕн халĕччен тупа туса кăтартусем пама тивнĕ-и?**

**– Панăччĕ. Анчах çав кăтартусемшĕн эпĕ ларса тухнă ĕнтĕ.**

* * *

**– Пĕлетĕн-и, ăна манăн укçа, машина, ресторансем тата Канар утравĕсем çинчи вилла кăна интереслентерет!**

**– Унашкаллинчен тармалла!**

**– Çапла пуль-ха та, анчах налук инспекцийĕнчен ăçта тарса пытанăн?**

* * *

**– Айăпланакан, арăмна мĕншĕн вĕлертĕн?**

**– Ăна еркĕнĕпе тытрăм.**

**– Апла тăк эсĕ арăмна мар, унăн еркĕнне вĕлерме пултарнă вĕт.**

**– Кун пирки эпĕ шухăшласа пăхнă. Кашни эрнере пĕрер арçынна вĕлериччен пĕр юххана тĕп туни лайăхрах пуль терĕм.**

# Сăмах касмăш



**Сылтăмалла:** 1. Пистолет марки. 5. Бывалыйпа Трус юлташĕ. 8. "... . Хроники убойного отдела" сериал. 9. Криминалист-экспертăн ĕç хатĕрĕ. 10. Корольтен кĕçĕнрех, валетран аслăрах. 11. "Пĕрре çуркунне" повеçри хурах сăнарĕ. 14. "Бегущая по волнам" роман авторĕ. 16. Лаша камăн харпăрлăхĕ пулнине кăтартакан паллă. 18. Кăнтăр Азири çĕр-шыв. 20. Киев çынни. 21. Тискер пусмăр, çынсене тĕп туни. 22. АПШри территори единици. 23. Певцовпа Безруков та, Басилашвилипе Дуров та. 25. Индонезири утрав. 28. Чăваш Республикин прокурорĕ. 32. Красноармейски салин ĕлĕкхи ячĕ. 33. Патшалăхсен хушшинчи пысăк пĕлтерĕшлĕ килĕшÿ. 34. Пĕр çын вăйĕллĕ "такси". 35. Европăри XIII ĕмĕрти искусствăри стиль. 36. "... невыполнима" боевик.

**Аялалла:** 1. Троллейбусра, билетсăр. 2. Тĕш тырă. 3. Ристан тумтирĕ. 4. "Турецкий гамбит" фильмра вылянă актер. 5. Финанс учрежденийĕ. 6. Алексей Балабанов ÿкернĕ боевик. 7. Детективлă сериалти Малдер агент ĕçтешĕ. 12. Англипе Францин тата Раççейĕн çарпа политика блокĕ. 13. Ют çĕр-шывран куçса килнĕскер. 15. Хăратса-хĕсĕрлесе укçа, пурлăх туртса илни. 16. 1000 килограмм. 17. Украинăри Çеçпĕл Мишши канлĕх тупнă хула. 19. Раççейри паллă кĕнеке издательстви. 22. Çĕр кăмрăкĕ кăларакан. 24. Тинĕс пулли. 26. Уголовлă кодексра вĕсем пĕтĕмпе 386. 27. Çирĕп бронăллă çар машини. 29. Доллар конкуренчĕ. 30. Măсăльмансен общинин пуçлăхĕ. 31. Римлянсен вăрçă турри.

### Хуравĕсем:

**Сылтăмалла:** 1. "Маузер". 5. Балбес. 8. "Опера". 9. Лупа. 10. Дама. 11. Махорка. 14. Грин. 16. Тавро. 18. Инди. 20. Украин. 21. Террор. 22. Штат. 23. Актер. 25. Ниас. 28. Метелин. 32. Трак. 33. Пакт. 34. Рикша. 35. Рококо. 36. Миссия.

**Аялалла:** 1. Мулкач. 2. Урпа. 3. Роба. 4. Бероев. 5. Банк. 6. "Брат". 7. Скалли. 12. "Антанта". 13. Мигрант. 15. Рэкет. 16. Тонна. 17. Остер. 19. "Дрофа". 22. Шахтер. 24. Треска. 26. Статья. 27. Танк. 29. Евро. 30. Имам. 31. Марс.

# Сăмах çерçи мар

"Ĕнер Шупашкарта суя укçа хатĕрлекенсене тытса чарнă. Çак ушкăн 10 пуслăх суя укçасем хатĕрленĕ. Полици вĕсене тÿрех психиатри больницине ăсатнă".

***Радион хыпарсен кăларăмĕнчен.***

"Пĕлетĕн-и, ĕнер ĕçрен таврăннă чух троллейбусра манăн сумкăна вăрă кĕнĕ. Киле çитсен уçрăм та – лара парать!"

***Хĕрарăмсен калаçăвĕнчен.***




"Ĕнер эпĕ хулари паркра тапăннă илемлĕ хĕр, сас парсам! Сана çаратнă чухне эпĕ ăнсăртран хамăн енчĕке ÿкерсе хăварнă. Эсĕ ăна тупнă тăк, тархасшăн, тавăрса парсам! Адрес – паспортра, паспорт вара – эсĕ тупма пултарнă çав енчĕкре. Тавăрса парсан укçан тав тăвăп".

***Телекуравăн "чупакан" йĕркисенчен.***

"Ĕçсе ÿсĕрĕлнĕ хыççăн стенапа карта хушшинче çапăçу пулнă".

***Полици сводкинчен.***

"Петрова гражданка кăшкăрашнă, шавланă, урăлтаркăчри çынсене канма чăрмантарнă".

***Полици протоколĕнчен.***

"Судья господин! Кирпĕч катăкĕ Сидоров пуçне лекмесĕрех вĕçсе иртнине кура эпĕ хÿтĕлекен Иванова тÿрре кăларма ыйтатăп".

***Адвокат ыйтса çырнинчен.***

Кăларăма Николай КОНОВАЛОВ хатĕрленĕ. ● Çырăр: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13, «Хыпар» – КРИМ ● Шăнкăравлăр: Тел. /8352/ 56-05-21.

# МĔН ÇЫРАÇÇĔ ХАÇАТСЕМ

# Чăн-чăн телей укçара мар

***«Минута славы» телепроект финалне тухма пултарнă, пурте килĕштерекен Зойăпа Валерăна Олимпиадăна каймалли путевка та, миллион тенкĕ те лекмен. Çапах та Беларусĕри çемье дуэчĕ çакăншăн пуç усмасть. Вырăнти артистсем Елена Ваенгăн «Курю» юррине хăйне майлă шăрантарса Интернетра чапа тухнă.***

### «Эпĕ мĕн, Пугачева-и?»

**– Беларусĕри Заречье ялĕнчи дояркăпа токаре Интернетра пурте пăхаççĕ. Мĕнле майпа çав шая çĕкленме пултартăр-ха?**

**Зоя:** Раççейри тăвансем хăнана килчĕç. Сĕтел хатĕрлерĕм. Кăштах ĕçрĕмĕр, çирĕмĕр, юрларăмăр. Шăллăм Валера купăс каларĕ. Мĕн каламалли? Кашни килтех çапла тăр? Тăвансен хĕрĕ пире карас телефонĕн камерипе ÿкерчĕ – çакна эпир асăрхаман та, пире кам та пулин курасса шухăшламан та. Пире ÿкернĕ хĕр Мускава таврăнсан видеона Интернета вырнаçтарнă. Веçех çакăнтан пуçланчĕ те.

**– «Пуçланнăшăн» хавас-и эсир?**

**З.:** Çынсем пирĕнте уйрăмраххине мĕн тупнă-ха? Ыттисем пекех эпир. Ăнчĕ темелле-ши?

**Валера:** Паллах, çапла чысланăшăн чун хĕпĕртет. Нотăсем пĕлмесен те ачаранпах юрлатпăр. Вырăнти культура керменне çÿреттĕмĕр, мероприятисене хутшăнаттăмăр. Юрланăшăн укçа парасса тĕлĕкре те тĕлленмен.

**З.:** Ялта пире ахаль те пĕлнĕ, юратнă. Халĕ ăçта кайсан та палламан çынсем ыталаса илеççĕ, пирĕнтен автографсем пама ыйтаççĕ. Малтанхи вăхăтра тĕлĕнеттĕм те: «Эпĕ мĕн, Пугачева-и?«» Халĕ хăнăхрăм ĕнтĕ.

**В.:** Анчах та тепĕр чухне çăлтăр пулма ывăнтарать. Нумаях пулмасть яла нимĕçсем килчĕç. Вĕсем те пирĕн çинчен илтнĕ иккен, паллашас тенĕ. Эпир сывăрма выртнăччĕ ĕнтĕ. Кÿршĕсем шаккаççĕ – тăмах тиврĕ, туристсене хисеп тумаллах. Хăналарăмăр вĕсене, юрларăмăр та паллах. Çăмăлах пулмарĕ. Çамрăк мар вĕт: эпĕ 57 çулта, аппа 10 çул аслăрах. «Эсĕ Бураново кинемейĕ пекех», – тетĕп ăна.

**З.:** Çапла, кăштах çамрăкрах пулнă тăк хамăрăн чаппа еплерех усă курмаллине шухăшласа тупаттăмăрччĕ ĕнтĕ. Кая юлтăмăр.

### «Ваенга хăйĕн телефонне пачĕ»

**– Манăн шухăшăмпа, эсир сăпайланатăр. «Минута славы» передачăра ывăннă пенсионерсем пек курăнмарăр.**

**В.:** Малтанах каяс та теменччĕ! Хуçалăха пăрахса хăварма çăмăл мар. Ăçта та пулин чĕнсен пире «Курю» юрра шăрантарма ыйтаççĕ. Çапах та эпир ыттине те пултаратпăр.

**– Ваенга пултарулăх енĕпе çирĕп хаклать. Хăех ирĕк пачĕ-и çак юрăпа сцена çине тухма?**

**З.:** Çаплах каларĕ: «Юрлăр, сирĕн лайăх пулса тухать». Ăслăскер, эпир унпа чăннипех мăнаçланнине ăнланать. Хăйĕн телефонне, концерта каймалли билетсем пачĕ.

**– Гузеевăна кÿренмерĕр-и? Малтанах вăл сире «Минута славы» проектăн тепĕр турне хăварасшăн марччĕ-çке. Масляков çеç çăлса хăварчĕ сире.**

**З.:** Çук-çке. Ларисăна эпир пур пĕрех юрататпăр. Хамăр патра кĕтетпĕр. Елена Яковлева та пытăр – хăй парнеленĕ вăкăр мĕнле пурăннине кĕтартăпăр.

**В.:** Мана НТВ каналти Вадим Такменев ноутбук парнелерĕ.



**– Çапах та миллион тенкĕ ытлашши пулмастчĕ ĕнтĕ…**

**В.:** Паллах. Эпир çурт умне тĕксе тăвакан пÿлĕме хăвăртрах вĕçлеттĕмĕр.

### «Мĕн чухлĕ параççĕ, çавăн чухлĕ илĕпĕр»

**– Сирĕн çине чап «йăтăнса аннă» хыççăн пурнăçăр палăрмаллах улшăнчĕ пулĕ?**

**З.:** Эпир çакна ăнланатпăр: паян уявсене юрлама чĕнеççĕ, ыран – çук. Хамăра тăрантаракан пахча, выльăхсем пирĕнпе пĕрлех юлĕç. Пысăках мар хăтлă çурт пур.

**– Час-часах тухса çÿретĕр-и?**

**В.:** Юбилейсем, туйсем, корпоративсем – ăçта кăна чĕнмеççĕ пулĕ. Хамăр кама та пулин кирлĕшĕн саванатпăр. 1-2 юрă юрлама та каятпăр. Хамăра чăн-чăн артистсем пек туятпăр.

**– Гонорар мĕнлерех сирĕн?**

**В.:** Нумай ыйтмастпăр. Çула кайма çиттĕр, кăштах хамăр валли тата. Мĕн чухлĕ параççĕ, çавăн чухлĕ илетпĕр.

**З.:** Чăн-чăн телей укçара тесе шухăшлатăр-и? Шалти, чун-чĕрери килĕшÿлĕх пĕлтерĕшлĕрех.

Пирĕн пурнăç çăмăл пулман. Анне эпĕ хĕр шутне кĕриччене вилчĕ, шăллăм питех те пĕчĕкчĕ-ха ун чухне. Ама çури пирĕн çинчен шухăшламан. Мана тăван патне ячĕç – каснă чĕлĕ. Валерăпа нумай çул пĕр-пĕрне курманччĕ. Пĕррехинче шăнкăравласа калаçрăмăр та пĕр-пĕрне кирлине ăнланса илтĕмĕр. Эпĕ упăшкасăр юлтăм, Валерăн та çемье пурнăçĕ ăнăçман, ниçта та кайма пулман. Çапла вара пĕрле пурăнма пуçларăмăр. Лайăх, интереслĕ пурăнатпăр.

**Ольга САБУРОВА.**
/«Собеседник»/

*Шăпасем*

# Соловейсен çемйин юрри



***46 çул тултарнă тĕле 16 ача амăшĕ пулса тăрасса Маринăран никам та кĕтмен. Çав шутра хăй те, упăшки те.***

Марина Соловей – Мускав çынни, вĕсен виçĕ ăрăвĕ çакăнта пурăннă, профессор мăнукĕ. Аслашшĕн учебникĕсемпе Мускав патшалăх университетĕнче математика вĕренеççĕ. Кремль сывăхĕнчех çуралса ÿснĕ пулин те паян вăл ялта пурăнать.

Пулас мăшăрĕпе Марина иккĕшĕ те 16 çулта чухне паллашнă. «Игорь мана килĕшсех кайманччĕ – профтехучилищĕре вĕренет, эпĕ вара института кĕме хатĕрленетĕп. Вăл çакна ăнланчĕ, куçран çухалчĕ. Çар хыççăн каллех курăнкалама пуçларĕ. Эпĕ качча кайнăччĕ ĕнтĕ, иккĕмĕш ача кĕтеттĕм. Мăшăрпа хутшăнусем йĕркеллех марччĕ, часах эпир уйрăлтăмăр. Игорь манпа юнашар пулчĕ – эпĕ института çÿренĕ вăхăтра аслă ывăлпа Антонпа ларчĕ. Хăй çуралнă кунхине Игорь пирĕн пата килчĕ, вара текех уйрăлман».

Мăшăрăн туй пулман, шурă кĕпене Марина 9 ача çуратсан венчете тăнă чухне тăхăннă: «1999 çулта эпир çĕнĕ пин çуллăха турă умĕнче саккунлă мăшăрланса кĕретпĕр терĕмĕр. Венчет хыççăн тĕлĕнмелле тапхăр пуçланчĕ – веçех йĕркеллĕ, эпир шухăшланă пек пулса пыратчĕ. Турă ачасем парать, вĕсем валли те парĕ текен каларăш çирĕпленчĕ, – тет Марина. – 5 ачаллă пулсан коммуналлă çуртри пÿлĕмпе хĕсĕнкелесе пурăнтăмăр. Кайран хваттер пачĕç, 10-мĕш ача çуралнă хыççăн эпир Мускавра чи нумай ачаллă пĕрремĕш çемье пулса тăтăмăр, влаçсем çуртăн пĕр хутне – 4 хваттер /пĕтĕмпе 8 пÿлĕм/ пире уйăрса пачĕç».

### Яла!

Яла куçасси çинчен Марина 90-мĕш çулсенчех шухăшланă. Хуçалăх тытсан çăмăлрах пуласса ăнланнă. 2000 çулсен варринче çемьене Мускавран 150 çухрăмра лаптăк панă. «Малтанах палаткăсенче пурăнтăмăр. Çурт туса пĕтерсен унта 14-мĕш ача – Алена – çуралчĕ. Турă пулăшнипе çăмăл çурататтăм. Пур ачана та тенĕ пекех Игорь пулăшнипе килте çуратрăм, – каласа парать Марина. – Пепке çут тĕнчене килсен кашни хутĕнчех килти лару-тăру улшăнать. Пысăк çемье ача тавра кăна çаврăнать. Мĕнешкел телей вăл тин çуралнă ачана алăра тытасси».

Çак çулсенче çемье няньăсен, асламăшĕ-кукамăшĕн пулăшăвĕсĕрех пурăннă. Марина, паллах, ĕçлемен. Игорь çар заводĕнче вăй хунă, каярах электроника юсама пуçланă. Çемье яла куçсан хăтлă хуçалăх йĕркеленĕ. Çуртпа мунча валли укçа мĕнле майпа тупăнни – уйрăм историсем. Акă вĕсенчен пĕри: бизнесмен хăйне сăтăр кÿнĕ улталăсем çинчен пĕлтерсен хавхалантарас пирки информаци панă. Тĕп хулари полици преступниксене хăвăрт арестленĕ. Пакунлă çын хавхалантару укçине илме килĕшмен, нумай ачаллă çемьене пама сĕннĕ. Çапла майпа предпринимать Соловейсен çемйипе çыхăннă. Тепĕр тĕслĕх: ыр кăмăллăх фончĕ пĕр мăшăрланура çуралнă 10 ачаллă çемьесем валли конкурс ирттернĕ. Соловейсем конкурсра çĕнтернĕ: çак миллионпа тата тепĕр пура туяннă. Марина конкурс валли аслă ачисемпе хатĕрленĕ альбома кăтартать. Вун-вун страница – çемье Çĕнĕ çула, Раштава, çуралнă кунсене /вĕсем кашни уйăхрах иртеççĕ/ кĕтсе илет... 16 ачи çинчен те /кашнин пирки уйрăммăн/ кĕске калав çырнă.

Ачасем пурте килте вĕренеççĕ. Вĕрентекенĕ пĕрре – Марина, ахальтен мар вăл педагогика институчĕ пĕтернĕ. Кашни çулах ачасем Мускаври шкулта черетлĕ класшăн экзаменсем параççĕ. Амăшĕн 2 вĕренекенĕ хальхи вăхăтра колледжра пĕлÿ илет.

### Инкек айккинчен иртмен

Марина патне кайнă чухне çулталăк каялла çемьере инкек пулнине пĕлтĕм – Игорь сарăмсăр вилнĕ. Кун пирки Марина макăра-макăра каласа пачĕ: «Игорь юр тасатнă. Ĕçне часах вĕçлесси çинчен шăнкăравласа пĕлтерчĕ. Тепĕр икĕ минутран чĕри ыратнипе аптăраса ÿкнĕ – тÿрех вилнĕ. Пире Игорьпе паллаштарнă тантăшăм çапла калатчĕ: «Эсĕ уншăн турăш вырăнĕнче. Вăл сан çине пăхса кĕл тăватчĕ». Халĕ эпĕ унăн сăн ÿкерчĕкĕ çине пăхса кĕл тăватăп. Игорь вилĕмĕпе çырлахма çăмăл мар, çапах та веçех турă ирĕкĕнчен килет».

Çак çемьере пур ачине те тĕне кĕртнĕ. «Пирĕнтен инçех мар пĕр пăтапа усă курмасăр XVII ĕмĕрте туса лартнă чиркÿ пур. Совет тапхăрĕнче ăна сÿтнĕ те вутăлăх сутнă. Арçынсем сăрт çине хăпарнă та чиркĕве çĕнĕрен çĕкленĕ. Тĕлĕнмелле истори, çапла мар-и?» – тет Марина.

Вăл – тĕлĕнмелле çемьен тĕп архитекторĕ. Унăн 5 мăнук ÿсет ĕнтĕ. Хĕрĕсем çемйисемпе Митинăра Соловейсене хăй вăхăтĕнче уйăрса панă 6-мĕш хутра пурăнаççĕ. Канмалли кунсенче яла пулăшма таврăнаççĕ. «Çакна калама йывăр пулин те Игорь пире укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен тивĕçтерсе хăварчĕ – 18 çултан кĕçĕнрех кашни ачана пособи тÿлеççĕ, – тет Марина. – Пирĕн нихăçан та кун чухлĕ тупăш пулман. Нумай ачаллă ашшĕ-амăшне вĕсем чĕрĕсывă чухне пулăшни питех те пархатарлă».

**Мария ПОЗДНЯКОВА.**
/«Аргументы и факты»/

Культура вучахĕ

# Пултаруллă çынсем кăмăла çĕклеççĕ



***Шĕнерсен «Калинушка» ушкăнĕн пултарулăхне Вăрнар районĕн культура çурчĕн сцени çинче курса хавхаланнă хыççăн «артистран та кая мар» çынсемпе тĕл пулас кăмăл хĕмленсе çирĕпленчĕ. Хорсен тупăшăвĕнче Нурăсри «Кружевница» ушкăнпа ăмăртса юрласа вĕсем мала тухрĕç. Профессионалсем пек виçĕ сасăпа янраттаракан «артистсене» ялсенче час-часах тĕл пулаймăн.***

Пултарулăх ушкăнĕ чăмăртаннăранпа вăхăт нумай та иртмен-ха. Виçĕ çул кăна. Апла пулин те районта таврари ялсенче ырăпа палăрма ĕлкĕрнĕ. Шĕнерсем районта иртекен кашни конкурс-ăмăртура, смотрта, уявра юрлаççĕ, ташлаççĕ, ыттисене тĕслĕх кăтартаççĕ. Кӳршĕ ялсенче пурăнакансем те вĕсем концертпа килессе чăтăмсăррăн кĕтеççĕ.

– Чăрăш Шĕнер культура аталанăвĕн центрне туса хунă хыççăн ушкăн тата та вăйланса çирĕпленчĕ, – тет Светлана Нестерова директор. Вăлах пултарулăх ушкăнĕн ĕçне-хĕлне йĕркелесе, ертсе пырать. – Тĕп шăнăр, паллах, культура ĕçченĕсем. Г.Кузьмина, О.Семенов, А.Кузьмин, Л.Иванова, В.Антонова, О.Сергеева, Л.Сергеева, Л.Давыдова, З.Кириллова... Пысăкрах мероприятисене учительсене явăçтаратпăр. Л.Рускина депутат хастар. Ял çыннисем те хутшăнасшăн, анчах район шайĕнчи смотр-конкурссем кăнтăрла иртеççĕ. Урăх вырăнта ĕçлекеншĕн çакă меллех мар.

«Калинушка» хорсен тупăшăвĕнче юрлани халĕ те хăлхара янăрать. Унтанпа чылай вăхăт иртнĕ пулин те çавăн чухнехи хавха тамалман. Çавăнпа кун пирки ыйтмасăр чăтаймастăп:

– Кам вĕрентет сире çакăн пек ăста юрлама?

– Илемлĕх ертӳçи Галина Кузьмина. Вăл тивĕçлĕ канăва тухиччен Вăрнарти 2-мĕш шкулта ачасене музыка вĕрентнĕ. Халĕ пире юрлама хăнăхтарать. Хорсен тупăшăвĕнче тăвată юрă юрламаллаччĕ. Вырăс халăхĕн «Ах, ты, степь широкая» юрра виçĕ сасăпа юрларăмăр. Жюри членĕсем пĕлтернĕ тăрăх – шăпах çавна пула мала тухма пултартăмăр, – каласа кăтартать Светлана Ивановна. – Ун чухне çавăн пекех чăвашла «Чӳречине яри те уçса ярăр», «Малиновка» /«60-70-мĕш çулсенчи юрăсем» номинацире/ тата «Если с другом вышел в путь» ача-пăча юррисене юрларăмăр. Олег Семенов тата Александр Кузьмин баян каларĕç.

Сăмах май, икĕ баянпа сцена çине тухасси Шĕнерсемшĕн çĕнĕлĕх мар. Вĕсен синтезатор та пур. Çакăнпа мăнаçланаççĕ те: кун чухлĕ музыка инструменчĕллĕ ушкăн районта урăх çук.

– Репертуар пуян-и? Мĕнле юрăсене кăмăллатăр? – тĕпчетĕп малалла.

– Галина Кирилловна юрламалла тет те тиркесе тăмастпăр, пурне те юрлатпăр, – калаçăва хутшăнаççĕ хĕрарăмсем, «Калинушка» ушкăнăн хастар юрăçисем. – «Тутасене тирпейлĕ тытăр», – тесе вĕрентет вăл пире. Чăнах та, капла сасă та янăравларах, кĕвĕ те çыпăçуллăрах пулса тухать. Кашни ĕçĕн хăйĕн вăрттăнлăхĕ çав.

– Халăх час-часах юрлама ыйтакан юрă пур-и сирĕн?

– Александр Николаевич кĕвĕленĕ «Пирĕн мĕншĕн кулянас» юрра юратса юрлатпăр. Çынсем те кăмăллаççĕ ăна, – тет Светлана Ивановна.

Пӳлĕме куçпа пăхса çаврăнатăп. Стена тăршшĕпех сцена тумĕсем çакăнса тăраççĕ. Пушмаксем шăкăрин лараççĕ.

– Кашни юрă валли уйрăм кĕпе пулĕ? – пытараймастăп тĕлĕннине.

– Ку енĕпе Людмила Моисеевна илемлĕх ертӳçи пусарулла. «Çĕнĕ юрă вĕренетпĕр – çĕнĕ кĕпе туянас», – тет. Итлетпĕр. Чылай чухне ĕлке хатĕрлесе хамăрах касатпăр, çĕлетпĕр, – пытарса тăмасть культура центрĕн директорĕ. – Шурă атă, чăваш кĕпи... Пурне те пĕрешкелли кирлĕ. Пĕлтĕр пысăк инкек пулчĕ: Шĕнерте клуб çунса кайрĕ. Пушарта питĕ нумай тум пĕтрĕ.

– Артист сцена çине тухса тунă çитĕнĕвĕн 60 процентне тумран килет, – калаçăва хутшăнать Людмила Моисеевна.

Итлетĕп, итлетĕп... Тĕлĕнӳ вăйланса пырать. Ăçтан çавăн чухлĕ вăхăт тапса тăма пултарать çак хĕрарăмсенче? Йывăрлăх кашни утăмрах. Хĕллехи вăхăтра клубра сивĕ, çăвартан пăс тухать. Апла пулин те ĕçлеççĕ. Тум çĕлеттерме те, смотр-конкурса е кӳршĕ яла концертпа кайма транспорт тытма та, тĕрлĕ уяв, мероприяти ирттерме те хăйсен кĕсйинчен тăкакланма тивет. Вĕсен кашнин çемье, ачасем пур. Шалăвĕ вара, паллă, пысăк мар. Шел те, ку инкек Шĕнерсемшĕн çеç мар. Район, республика нуши вăл. Çакăн пек çынсем пуртан тытăнса тăрать те ĕнтĕ ялсенче культура.

...Ачасене илем патне туртăнма хăнăхтараççĕ кунта. Темиçе çул каялла «Ирлеана» ташă ушкăнĕ йĕркеленнĕ.

– Ирина, Лена, Аня, Настя – Шĕнер клубĕнче чи малтан ташлама пуçланă хĕр ачасем. Ушкăн ятне вĕсен кĕскетнĕ ячĕсене пĕрлештерсе тунă. Хĕр ачасем ӳсеççĕ, шкул вĕренсе пĕтерсе тухса каяççĕ, вĕсен вырăнне теприсем килеççĕ. Анчах ушкăн ячĕ улшăнмасть, – каласа кăтартать С.Нестерова.

– Ташлама кам вĕрентет?

Пурте Людмила Моисеевна еннелле тинкернине асăрхаса унпа сăмах пуçаратăп:

– Ташăсене хăвăр шухăшласа кăларатăр-и?

– Пединститутра вĕреннĕ çулсенче ташă кружокне çӳреннĕччĕ. Çавăн чухнехине аса илсе халĕ ачасене вĕрентетĕп. Тепĕр чухне шухăшласа кăларма та тивет. Пĕрле вĕреннĕ тусăм Канашра пурăнать. Ăна чĕнсе илетĕп. Вăл нумай пулăшать, – тет шкулта кĕçĕн классене вĕрентме те, ялти клубра ĕçлеме те ĕлкĕрекен Л.Иванова.

Пĕр ташша хатĕрлесе çитерме, сцена çине кăларма чылай вăхăт кирлĕ. Шĕнерсем вара кашни уявра, мероприятире, смотр-конкурсра çĕннине кăтартаççĕ. Шутласа пăхăр: çакăн валли мĕн чухлĕ вăй, чăтăмлăх кирлĕ?

Лаша пуласси тихаран паллă теççĕ. 4-мĕш класра вĕренекен Диана Сергеева ӳссен артистка пуласси халех туйăнать. Амăшĕн ĕмĕтне пурнăçа кĕртекенни теççĕ ун пирки. Хĕр ача хăй калăпланкан сăнарпа куракана тыткăнлать. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен таврăнайман салтак пирки сăвă вуланă чухне хăй те макăрнă, залра ларакансем те куçĕсене шăлнă. Хурлăхлă сăвăпа çынсен чунне витерме пултарнă вăл. Чăвашла юптарусене ăста вулать тата. Ĕненмелле, култармалла юптарать.

...Пултаруллă çынсен кашни сăмахĕ чуна пырать, ĕçĕ кăмăла çĕклет. Итлетĕн, итлетĕн... Вĕсем пирки ытларах та ытларах пĕлес килет. Шĕнер артисчĕсем шăпах çапла çынсем пулчĕç.

**Валентина БАГАДЕРОВА.**

Вăрнар районĕ

## Петр Владимирович ДЕНИСОВ



86 çула кайса 2014 çулхи ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче паллă ученăй, истори наукисен докторĕ Петр Владимирович Денисов профессор вилнĕ.

П.В.Денисов 1928 çулхи çурла уйăхĕн 28-мĕшĕнче Чăваш АССРĕнчи Первомайски /хальхи Патăрьел/ районĕнчи Ишлĕ ялĕнче çуралнă. Петр Владимирович Хусанти В.И.Ульянов-Ленин ячĕллĕ патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. СССР Наукăсен академийĕн Хусанти филиалĕн Чĕлхе, литература тата истори институтĕн аспирантурине пĕтернĕ. Студент çулĕсенче Н.В.Никольскипе, пирвайхи чăваш историк-этнографĕпе, паллашни ăна Атăл тăрăхĕнчи вырăс мар халăхсене Христос тĕнне йышăнтарнин ыйтăвне тĕпчеме хавхалантарнă.

П.В.Денисов Чăваш АССР Министрсен Канашĕ çумĕнчи Чĕлхе, литература, истори тата экономика наука-тĕпчев институтĕнче /хальхи ЧПГНИ/ историпе этнографи секторĕн наука сотрудникĕнче ĕçлеме пуçланă /1952-1957/. 1962 çулта чăвашсен тĕн ĕненĕвĕн темипе кандидат диссертацине хӳтĕленĕ, И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕрентме пуçланă. 1967 çултанпа Петр Владимирович хăйĕн пурнăçне И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕпе çыхăнтарнă: малтан доцент пулнă,1973-1988 çулсенче – СССР историйĕн кафедрин заведующийĕ. 1973 çулта «Религия и атеизм чувашского народа» монографишĕн ăна истори наукисен докторĕн ученăй степеньне панă. 1976 çулта Петр Владимировича профессор ятне илнĕ.

1990 çулта П.В.Денисов пуçарнипе И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче археологи, этнографи тата регион историйĕн кафедрине туса хунă, ăна вăл хăй ертсе пынă. 2002 çултанпа Петр Владимирович археологи, этнографи тата регион историйĕн кафедрин профессорĕнче тăрăшнă.

П.В.Денисов – 150 ытла наука ĕçĕн, çав шутра 12 монографи авторĕ. Вăл наука енĕпе редакцилепе 50 ытла монографи, учебник, чăваш халăхĕн историпе этнографийĕн ыйтăвĕсемпе хатĕрленĕ тематика пуххисем тухнă.

П.В.Денисовăн тӳпи чăвашсен этногенезĕн çивĕч ыйтăвне, чăваш халăхĕн тĕн ĕненĕвне тата ăна Христос тĕнне йышăнтарнин историне тĕпчессинчи тӳпи те пысăк.

Петр Владимировичăн наукăри ĕç-хĕлĕн тухăçлă çул-йĕрĕ – Чăваш Енĕн паллă çыннисен пурнăçĕпе пултарулăхне тĕрлĕ енлĕн çутатни. Вăл В.А.Сбоев, В.К.Магницкий, Н.М.Охотников, Н.И.Ашмарин, Н.В.Никольский, Н.Я.Бичурин çинчен тĕплĕ публикацисем хатĕрленĕ.

45 çул ытла П.В.Денисов Чăваш Енри аслă вĕренӳ заведенийĕсенче преподавательте тăрăшнă, çав шутра 40 çул ытла республикăн тĕп вузĕнче – И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче.

Петр Владимирович наукăпа педагогикăн çĕнĕ ăрăвне çитĕнтерес ĕçе хастар хутшăннă. Вăл ертсе пынипе 19 ученăй кандидат ĕçĕсене хӳтĕленĕ, 8 çын Атăл тата Урал тăрăхĕсенчи халăхсен этнологийĕпе доктор диссертацийĕсем çырнă. Вăл вĕрентнĕ çамрăксенчен ученăй-этнологсен шкулĕ йĕркеленнĕ, вĕсем чăваш халăхĕн культурипе йăли-йĕркине ăнăçлă тĕпчеççĕ.

П.В.Денисов профессорăн наукăпа педагогикăри тава тивĕçлĕ ĕçне Чăваш Республикин Патшалăх премийĕпе, Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕн тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотисемпе палăртнă. 1980 çулта ăна «Чăваш АССР наукăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă.

Петр Владимирович Денисовăн çутă сăнарĕ пирĕн чĕрере ĕмĕр-ĕмĕр упранĕ.

**И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн ректорачĕ, ĕçченĕсен профкомĕ, студентсен общество организацийĕсем.**

*Петр Владимирович Денисовпа ака уйăхĕн 26-мĕшĕнче 12-рен пуçласа 13 сехетчен çак адреспа сыв пуллашаççĕ: Шупашкар хули, Университет урамĕ, 38 çурт, ЧПУн вĕренӳпе спорт комплексĕ.*

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

Администрация Красночетайского района сообщает о наличии свободных земельных участков, распределяемых на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения»:

– с кадастровым № 21:15:020804:104, местоположение: Чувашская Республика, Красночетайский район, Испуханское сельское поселение, земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:15:020804, для сельскохозяйственного производства, площадью 60352 кв.м;

– с кадастровым № 21:15:020804:105, местоположение: Чувашская Республика, Красночетайский район, Испуханское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:15:020804, для сельскохозяйственного производства, площадью 51897 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429040, село Красные Четаи, пл. Победы, дом 1 /здание администрации/, кабинет № 306 с 8-00 до 17-00 час. Ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок 2-13-55.

Администрация Красночетайского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемый на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения»:

– с кадастровым № 21:15:120101:189, местоположение: Чувашская Республика, Красночетайский район, Красночетайское сельское поселение, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:15:120101, для сельскохозяйственного производства, площадью 16001 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429040, село Красные Четаи, пл. Победы, дом 1 /здание администрации/, кабинет №306 с 8-00 до 17-00 час. Ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок 2-13-55.

ООО «Агрохолдинг «ЮРМА» реализует
ЖИВУЮ ПТИЦУ:
**КУР**-несушек, **молодняк КУР**-несушек,
**ЦЫПЛЯТ-бройлеров, ГУСЯТ**
*Место продажи:*
Чувашская Республика, Чебоксарский р-н, д. Лапсары, ул. Луговая, 31.
Тел.: 8(8352) **50-77-49**, моб. **89176572447.**


СТРОИТЕЛЬНАЯ КОМПАНИЯ ЦЕНТР
БЕТОН
РАСТВОР
ДОСТАВКА
г. Чебоксары, ул.Пристанционная, 7
(8352) 76-56-00, 63-80-08

www.profilch.ru
ПРОФНАСТИЛ
СОБСТВЕННОЕ ПРОИЗВОДСТВО
ангары,
КОМПЛЕКТУЮЩИЕ ДЛЯ КРОВЛИ, ВОДОСТОКИ, ДЫМНИКИ
МОНТАЖ ЗАБОРОВ
тел. (8352) 22-95-45, 63-82-85

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

## УСЛУГИ

**32.Наркология. Живите трезво!** Анонимно. Консультация бесплатно. С 8 до 13 ч. А.: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.**
*Лиц. ЛО 2101000928 МЗ СР РФ от 13.09.13 г. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**99.Видеонаблюдение,** автоматические **ворота.** Т. 8-927-863-63-98.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и доставка** ж/б колец. Т. 8-905-343-42-07.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. **Скидки.** Т. 8-927-668-75-74.

**231.Установка** заборов, ворот, свай винтовых, **обшивка** сайдингом. Т.: 299-788, 8-917-650-06-40.

**250.Кровельные, фасадные работы**. Монтаж водостоков. Гарантия. Качество. Т. 8-903-322-04-79.

## РАБОТА

**100.Требуются монолитчики.** Т. 8-937-952-58-67.

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

## СУТАТĂП

**168.**Лайăх кĕрекен **таптарнă çăм.** Т. 89170664146.

## ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.excomfort.ru. Т.: 46-55-44, 89538998224.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20x20x40, 12x20x40, 9x20x40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; цемент, песок. Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**6.Песок,** гравмассу, чернозём, **торф,** щебень, **бой кирпича** с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

Дорогие жители и выходцы из деревни Каткасы Цивильского района. Ждем вас 1 Мая 2014 года к 9-00 часам на субботник по уборке кладбища.

## ПРОДАЮ

**9.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, кирп. бой. Дёшево. Доставка. Т.: 443021, 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 444433.

**15.Кирпич** – любой, брусчатку, **кольца,** ОПГС, КБ. **Т. 89613393363.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; **кровля,** обшивка домов, **ТЕПЛИЦЫ,** навесы. Доставка. Установка. Пенсионерам **скидки.** Т.: 89022881447, 38-75-74.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.Керамблоки** 20x20x40, 12x20x40, 10x20x40, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, к/кольца. Доставка. Т. 89033468556.

**28.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 89370101054.**

**30.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА,** двери стальные, межкомнатные. Низкие цены. Гарантия качества. Звоните. Тел. 89379549245.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**38.Брусчатку, плиты тротуарные.** Огромный ассортимент. Укладка. Т. 89674702736.

**42.Керамблоки** 12x20x40, 20x20x40, **кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 89370100141.

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20x20x40 – **33** руб., 9x20x40, 12x20x40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозём, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 12x20x40, 20x20x40 от производителя, **цемент М-500.** Т.: 489277, 89033899038.

**48.Керамблоки,** кольца колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит,** бетон, **чернозём, навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 89613463834.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 89613463834.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы** кованые. Т. 89276689587.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** любой, **срубы** в наличии и на заказ, **дрова,** горбыль. Т. 8-903-389-14-00.

**73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг,** водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 89033220479.

**75. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 8-937-952-84-67, Владимир.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3x6** – 12000 р., **3x8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**79.Прицеп** мотоблока, мини-трактора. Т. 89053444735.

**108.ПЧЕЛОСЕМЬИ.** Т. 89196535092.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые **окна**, железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.



**126.Теплицы** из поликарбоната: 3x4, 3x6, 3x8, 3x10 – в наличии. Доставка по ЧР. Т. 8/8352/ 48-08-23.

**128. Пластиковые ОКНА,** деревянные. Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 5 лет. **Скидки.** Т. 8-937-391-39-91.

**134.Кирпич, керамблок.** Заводские цены. Д-ка манипул. Т. 447353.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**191.Мальков карпа, толстолобика,** белого **амура.** Т. 89061313473.

**203.Пиломатериал** любой размер: доска шпунтованная, вагонка, имитация бруса; **цемент, гипсокартон,** утеплитель, крепеж. Доставка по звонку. Т. 8-937-953-90-06.

**212.ПЧЕЛОСЕМЬИ.** Т. 8-961-342-90-59.

**216.Шпагат сеновязальный.** Дёшево. Тел. 89278516858.

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама
пĕлтерÿ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ.

## *Саламлатпăр*



***Савнă мăшăрăма, юратнă аннене, хаклă кукамая, асаннене – Елчĕк районĕнчи Яманчўрел ялĕнче пурăнакан <u>Мария Леонидовна АКИМОВĂНА</u> – 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан чи ырă та ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Пурнăç çулĕпе малашне те хастаррăн утма çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, пархатарлă кун-çул, çутă ăраскал сунатпăр. Вăрăм ĕмĕр сукмакĕ санăн яланах такăр та анлă пултăр.***

*Юратнă çыннăмăр эс пирĕн,*
*Санран хакли çук çĕр çинче.*
*Турри нумай çул патăр сывлăх,*
*Санпа кăна кун-çул хитре.*

*<u>Мăшăрĕ, ывăлĕсем, хĕрĕсем, кинĕсем, кĕрÿшĕсем, мăнукĕсем.</u>*

## ПРОДАЮ

**217.<u>Грабли</u>** <u>от 24 тыс. руб.,</u> **<u>плуги, картофелесажалки, окучники, фрезы, косилки.</u>** Низкие цены. Всё новое! Доставка! **Тел. 8-937-388-50-89.**

**224.Пчелосемьи, улья,** мёд, готовые **рамки.** Тел. 89003303090.

**230.Бетон, раствор,** фундаментные **блоки.** Доставка по Чувашии. Т.: 89373918648, 89278535732.

**238.Бетон, керамблоки, радиаторы.** Доставка. Тел. 67-14-22.

**247.СЕМЕНА** люцерны, пшеницы 1-ой репродукции. Т. 89061363688.

**248.Дом** в Ядринском районе, **40 соток земли** – 98000 руб. Т. 8-927-841-85-84.

**249.БРУСЧАТКУ, плитку** тротуарную, **керамзит,** песок в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 8-903-322-04-79, 8-903-358-06-79.

**253.КВАДРОЦИКЛ** новый, бензиновый – 35000 руб. Т. 8-937-940-95-11.

**276.Телят** /1-2 мес./ – **в Шумерлинском районе.** Т.: 8-927-998-82-27, 8-937-394-50-47.

**ОТКРЫТОЕ АКЦИОНЕРНОЕ ОБЩЕСТВО "ХЛЕБ"**
**Бухгалтерский баланс на 31 декабря 2013 г.**

млн. руб.

| АКТИВ | Код | На отчетную дату отчетного периода | На 31 декабря предыдущего года | На 31 декабря года, предшествующего предыдущему |
|---|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 | 5 |
| **I. ВНЕОБОРОТНЫЕ АКТИВЫ** | | | | |
| Итого по разделу I | 1100 | 135 | 109 | 86 |
| **II. ОБОРОТНЫЕ АКТИВЫ** | | | | |
| Итого по разделу II | 1200 | 46 | 51 | 52 |
| **БАЛАНС** | 1600 | 181 | 160 | 138 |
| **ПАССИВ** | | | | |
| **III. Капитал и резервы** | | | | |
| Итого по разделу III | 1300 | 132 | 114 | 107 |
| **IV. Долгосрочные обязательства** | | | | |
| Итого по разделу IV | 1400 | 2 | 4 | 1 |
| **V. Краткосрочные обязательства** | | | | |
| Итого по разделу V | 1500 | 47 | 42 | 30 |
| **БАЛАНС** | 1700 | 181 | 160 | 138 |

**Отчёт о финансовых результатах**
**(период с 1 января по 31 декабря 2013 года)**

млн. руб.

| Показатель | | За отчетный период | За аналогичный период предшествующего года |
|---|---|---|---|
| Наименование | Код | | |
| 1 | 2 | 3 | 4 |
| Выручка (нетто) от продажи товаров, продукции, работ, услуг (за минусом налога на добавленную стоимость, акцизов и аналогичных обязательных платежей) | 2110 | 672 | 628 |
| Себестоимость проданных товаров, продукции, работ, услуг | 2120 | 527 | (500) |
| Валовая прибыль | 2100 | 145 | 128 |
| Коммерческие расходы | 2210 | 120 | (114) |
| Проценты к уплате | 2330 | 1 | - |
| Прочие доходы | 2340 | 7 | 2 |
| Прочие расходы | 2350 | 9 | (8) |
| Прибыль до налогообложения | 2300 | 22 | 8 |
| Текущий налог на прибыль | 2410 | (5) | (2) |
| Изменение отложенных налоговых обязатсльств | 2430 | (1) | 1 |
| Чистая прибыль | 2400 | 17 | 6 |
| Справочно: постоянные налоговые обязательства | 2421 | 1 | 1 |

**Генеральный директор Е.И. Бадаева**
**Главный бухгалтер А.В. Матвеев**

Годовая бухгалтерская отчетность за 2013 год утверждена годовым общим собранием акционеров 24 апреля 2014 года. Стоимость чистых активов общества составляет на 01.01.2013 г. – 114 млн. руб.; на 31.12.2013 г. – 132 млн. руб.

По заключению аудитора ЗАО "Консалтинговая фирма "Аудит-Консалтинг" (ОРНЗ 11203062120, член СРО НП "Московская аудиторская палата") финансовая (бухгалтерская) отчетность ОАО "Хлеб" отражает достоверно во всех существенных отношениях финансовое положение на 31.12.2013 г. и результаты финансово-хозяйственной деятельности за период с 01.01.2013 г. по 31.12.2013 г. включительно в соответствии с требованиями законодательства РФ.

Аудиторское заключение от 24.03.2014 г. Исполнительный орган ЗАО "Аудит-Консалтинг" находится по адресу: г.Чебоксары, Московский пр., д.18.

Бухгалтерская отчетность представлена в Территориальный орган Федеральной службы государственной статистики по Чувашской Республике.

# Парнесем хавхалантарччăр

*Чăваш наци музейĕнче «Хальхи наградăсем, парнесем, асăнмалăх япаласем. Регионти ăнăçлă шухăшсем» семинар иртнĕ. Унта тĕрлĕ награда продукцийĕсене хатĕрлес ĕçе аталантарас ыйтусене пăхса тухнă.*



● *Константин Волчинский, Эдуард Максимов, компанин спорт енĕпе ĕçлекен специалисчĕ Екатерина Геронтьева, ЧР каратэ федерацийĕн ертӳçи Вячеслав Тимофеев.*

Семинар йĕркелӳçи – атрибутика япалисем кăларас енĕпе 22 çул ытла ĕçлекен «Диалог-Конверсия» пĕрлешӳ. Предприятин тĕп тĕллевĕ – хăйсен ĕçне регионсенче йĕркелесси. Çавна май предприяти тĕрлĕ регионта иртекен спорт ăмăртăвĕсен çĕнтерӳçисемпе призерĕсене чысламашкăн наградăсем туса кăларать.

«Кашни регионăн хăйĕн тĕп паллисем пур. Паллах, çак символсем медальсемпе кубоксен çинче пулмаллах. Калăпăр: Чăваш Енре е Шупашкарта иртекен ăмăртусен парнисенче республикăн тата хулан ялавĕсемпе гербĕсен паллисене ӳкернĕ. Вĕсем ку тăрăхри спортсменсен кăна мар, хăнана килекенсен асĕнче те юлĕç», – палăртнă «Диалог-Конверсия» пĕрлешӳвĕн генеральнăй директорĕн çумĕ Константин Волчинский.

Пирĕн республикăра наградăсемпе сувенирсен продукцине кăларас енĕпе асăннă пĕрлешӳвĕн официаллă дилерĕ «Информ-Медиа» компани ĕçлет. Кашни парне хăйне евĕрлĕ те илĕртӳллĕ пулмалла. Паянхи отрасльте ахаль диплом-кубокпа никама та тĕлĕнтереймĕн. Çавăнпа султан çул дизайн енĕпе те, мĕнле япаларан ăсталассипе те çĕнĕ мелсем çуралаççĕ. Хальхи вăхăтра туянакан пĕр-пĕр уяв тĕлне хатĕрленĕ парнене кăмăллать, пĕр-пĕр темăпа çыхăннă сувенир ăсталасси те йăлана кĕнĕ.

«Информ-Медиа» реклама-производство компанийĕн директорĕ Эдуард Максимов та çак шухăшпа килĕшет. «Производство тата персонификаци ĕçĕнче çĕнĕ йышши технологисемпе усă куратпăр. Вĕсем кашни япалана ӳкерчĕкпе илемлетме май параççĕ. Хăйне евĕрлĕ те хитре парнепе саккасçăсемпе туянакансем те кăмăллă», – тет вăл.

«Информ-Медиа» компани пур ĕçе вăхăтра, саккасçăсем ыйтнине тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлать. Акă "Хыпар" Издательство çурчĕ çак фирмăпа чылай çул ĕçлĕ çыхăну тытать. Кире пуканĕ йăтассипе "Хыпар" парнисемшĕн иртерекен турнир валли саккассене пысăк пахалăхпа пурнăçлать.

■ **Е.АНДРЕЕВ**

## Кĕскен

● **Тюмень облаçĕнчи чылай хĕрарăм хăйĕн хушаматне çĕннипе, илемлĕреххипе улăштарать. Халĕ облаçра Красивая, Бриллиант, Лас-Вегас хушаматсемпе çӳрекен пикесем пур. Çавăн пекех хăшĕсем иккĕллĕ ятсем илеççĕ, тĕслĕхрен, Елизавета-Ольга. Вырăнти загссенче ĕçлекенсем калана тăрăх – "хитре" хушаматсене ытларах чухне 30 çултан иртнĕ хĕрарăмсем суйлаççĕ.**

●**Приморье крайĕнче пурăнакан çын судра хăйĕн ĕçне пăхса тухнă вăхăтрах авланнă. Арçынна вăрланăшăн айăпланă. Лару иртнĕ май тăхтав вăхăтĕнче зала загс сотрудникĕпе хăнасем кĕнĕ. Судра айăпланакана тата унăн савнă хĕрне судья ирĕк панипе упăшкипе арăмĕ пулса тăни çинчен пĕлтернĕ. Туй каччи мăшăрне решетке урлă çĕрĕ тăхăнтартнă, хăйне вара арăмĕнчен çĕрĕ илме приставсем ирĕк паман. Сырăнă хыççăн арçын тĕлĕшпе приговор вуланă.**







| | кăнтăрла | | çĕрле |
|---|---|---|---|
| 26.03 | + 5 | - | 1 |
| 27.03 | + 10 | + | 5 |
| 28.03 | + 14 | + | 6 |
| 29.04 | + 15 | + | 4 |
| 30.04 | + 18 | + | 9 |
| 01.05 | + 17 | + | 11 |
| 02.05 | + 20 | + | 10 |

## Саламлатпăр



*Хисеплĕ те юратнă йăмăка, Çĕрпӳ районĕнчи Пĕрремĕш Вăрманкас ялĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Шупашкарта пурăнакан Валентина Леонидовна АФАНАСЬЕВĂНА – 50 çул тултарнă ятпа чĕререн саламлатпăр. Пурнăçăн анлă çулĕпе йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма çирĕп сывлăх, тăнăçлăх, пархатарлă кун-çул, çăл куç пек тапакан вăй-хал, иксĕлми телей сунатпăр.*

*Ивановсем, Фроловсем, Александровсем тата ытти тăванĕ.*

# Гороскоп

*Ака, 28-çу, 4*

**Сурăх.** Тунти кунах тавлашуллă темиçе саманта сирме тивет. Апла пулин те ан пăшăрханăр: ку эрне чылай пулăмпа савăнтарĕ. Çĕнĕ çынсемпе паллашатăр, чĕрере юратуллă туйăмсем çуралнине туятăр. Çул çӳреве кайма палăртнăччĕ-и – ĕмĕтĕре пурнăçламалли лайăх тапхăр.

**Вăкăр.** Ĕçпе çыхăннă тĕрлĕ шухăш пур-и, проектсем çуралаççĕ-и – кун çинчен никампа та сӳтсе ан явăр. Пĕтĕмлетӳ тума та ан васкăр, тепĕр эрнечен тăхтăр – тĕллĕ шухăшламалăх вăхăт пулĕ. Ытлари кун маларах шантарнă сăмаха пурнăçлăр, парăм пур тăк тавăрăр.

**Йĕкĕреш.** Сывлăхăра упрăр, тума пултарайман ĕçе ан пуçăнăр. Юн кун хăвăра алла илĕр, чунри тарăхăва пула сывăх çыннăрсене ан кӳрентерĕр. Хутшăнăва аркатас мар тесен чăтăмлăрах пулмалла. Шăмат кун парикмахер патне кайма палăртнăччĕ пулсан урăх куна куçарăр, унсăрăн кăмăлăра пăсмалли сăлтав тупăнĕ.

**Рак.** Ку эрнере тĕрлĕ тĕпчев ĕçĕ иртерĕр. Яваплă пĕр-пĕр ĕçе ăнланмастăр пулсан ку енпе вăй хуракан специалистпа канашламасăр пĕтĕмлетӳ ан тăвăр. Пулăшу кирлĕ тĕк ыйтма ан вăтанăр. Юн кун мăшăрăрпа /савнийĕрпе/ пĕрле пулмашкăн вăхăт тупăр.

**Арăслан.** Хăвăрпа мĕн пулса иртнине тĕплĕ тишкерĕр. Кăмăл-туйăма ытлашши ирĕке ярса ĕçри лару-тăрăва кансĕрлеме ан парăр – сирĕншĕн халĕ ку чи çивĕч ыйту. Ытлари кун хурав пама ан васкăр, суйни те вырăнлă мар, унсăрăн хăш-пĕр хутшăну арканма пултарĕ.

**Хĕр.** Чун-чĕре хушнине çеç туни кăлтăк чылай кăларса тăратĕ. Çавăнпа лайăх шухăшлăр. Тӳрех ан кулянăр, эсир кирек мĕнле йывăрлăха та парăнтарма вăй çитереетĕр. Никамран та – аван пĕлетĕр-и ăна е сахал-и – нимĕнле парне те ан йышăнăр. Кĕçнерни кун урăх çын ĕçĕшĕн сире айăплĕç.

**Тараса.** Çăлтăрсем зодиакăн çак паллин тапхăрĕнче çуралнисене шалти туйăма итлеме сĕнеççĕ – вăл ку эрнере кирлĕ хыпар систерĕ. Юн кун сире юриех тарăхтаракан тупăнĕ, кăмăла кайман çынсенчен май пур таран пăрăнăр.

**Скорпион.** Ан тĕлĕнĕр, анчах сирĕн унччен тăшман пулнă çынсемпе пĕрле проектсем хатĕрлеме тивĕ. Ку эрнере кĕсьене хушма тупăш кĕрĕ, ĕçлеме çеç ан ӳркенĕр. Ытлари кун еркĕнпе ан курнăçăр, кун çинчен мăшăрăр /савнийĕр/ пĕлĕ. Ку яхăнта никама та нимĕн те ан шантарăр.

**Ухăçă.** Ĕçсĕр аптăраса лармăр, анчах пĕтĕмпех хăвăр тăваймăр, çавăнпа пулăшу ыйтăр. Палăртни нумай тăк тăванăрсемпе хисеплĕ тус-юлташăра та явăçтарăр. Çынсемпе хутшăнни малашне те пулăшĕ.

**Ту качаки.** Ку эрнере пĕлӳ пухма, хăвăра аталантарма тăрăшăр. Пĕр-пĕр курса е семинара кайма вăхăт тупăр. Ĕçпе çыхăннă çĕнĕ хутшăнусем çирĕп пулĕç. Тунти кун тавралăха илĕртме май шырăр. Сирĕнпе паллашас текенсене ытлари кун ан хирĕçлĕр.

**Шыв тăкан.** Кашни утăма шухăшласа тăвăр, унсăрăн каярахпа ӳкĕнмелле пулĕ. Хăвăра айккинчен сăнăр, кăмăл-туйăма ирĕке ан ярăр. Сире пысăк ĕçе явăçтарма хăтланĕç, хурав пама тытăнса тăрăр.

**Пулăсем.** Ку эрне Пулăсене тĕлĕнтермĕшсемпе савăнтарĕ. Тахçантанпах кăсăклантаракан ыйту хуравне пĕлеетĕр, ытти çынна пăхăнтарма пултараятăр. Кирек мĕнле лару-тăруран тухма та тĕрĕс çул тупаятăр, çивĕч ыйтусене татса параятăр. Ытлари кун, ахăртнех, аякран килнĕ çынпа паллашатăр.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /директор-тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор И.В.ИВАНОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай
/8-835-38/2-18-02, 2-11-95–Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 8463. Заказ 1505.
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.